24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941
июль
27
вырсарникун
175 (5890) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Красноармеец А. И. Заходскине тата полковник В. А. Трубачева Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Германи фашизмне хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюллӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене **Ленин орденӗ** тата **«Золотая Звезда» медалӗ** парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Красноармеец **Заходский** Александр Иванович
2. Полковник **Трубачев** Василий Алексеевич.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 ҫулти июлӗн 25-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Майор Б. П. Попова Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Германи фашизмне хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюллӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн майор Борис Петрович **Попова Ленин орденӗ** тата **«Золотая Звезда» медалӗ** парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 ҫулти июлӗн 25-мӗш.

Отечественнӑй вӑрҫӑ тата Осоавиахимӑн задачисем

Пирӗн тӑван ҫӗршыв Германи фашизмне хирӗҫ ҫапӑҫать. Хӗрлӗ Ҫар, Тинӗс-Ҫар Флочӗ тата Совет Авиацийӗ совет ҫӗршывӗн кашни пусӑмӗшӗн паттӑррӑн кӗрешеҫҫӗ. Вӗсемпе пӗрле пӗтӗм совет халӑхӗ отечественнӑй вӑрҫа ҫӗкленсе тухрӗ.

Сталин юлташ июлӗн 3-мӗшӗнче радио тӑрӑх тухса каланӑ ҫӑмахра Хӗрлӗ Ҫар тылне тӗреклетсе пыма, тылри мӗнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, суя хыпар саракансене хирӗҫ пӗр шеллемесӗр кӗрешсе пыма, шпионсене, диверсантсене, тӑшман парашютисчӗсене пӗтерсе пыма чӗнчӗ.

Ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Осоавиахим организацийӗ те пикенсе, пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлемелле. Осоавиахим организацийӗсен, мӗнле пулсан та, сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма халӑха хальтерех вӗрентсе хатӗрлемелле. Пирӗн ҫӗршыври граждӑнсен 16 ҫултан пуҫласа 60 ҫула ҫити пурте ҫак кӗске вӑхӑтрах сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма тата вӑл вӑхӑтра хӑйсене тыткалама вӗренсе ҫитмелле.

Ҫавӑнпа пӗрлех, Осоавиахим организацийӗсен ачасене сывлӑшран килсе тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнусенчен сыхласа хӑварас тӗлӗшпе те ӗҫлемелле, ачасене хӑйсене те ку ӗҫе хӑнӑхтарса пымалла. Пӗтӗм халӑхӑн ПВХО ӗҫне вӗренсе сывлӑшри тӑшманран хӳтӗленме пӗлмелле.

Сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма обязательнӑй йӗркепе вӗрентнипе пӗрлех, Осоавиахимӑн самозащита групписене ҫирӗплетсе пымалла, сывлӑшран килсе тапӑннӑ вӑхӑтра пушара хирӗҫ кӗрешме, аварисене пӗтерсе хума, пирвайхи пулӑшу пама вӗсене вӗрентсе хатӗрлес пулать. Халӑха ПВХО ӗҫне вӗрентессине организацилес ҫӗрте Осоавиахим организацийӗсен самозащита групписене авиабомбӑсенчен хӳтленмелли вырӑнсем туса хатӗрлеме, пушара хирӗҫле правилӑсене пӑхӑнма, светомаскировка тума тата сывлӑшран килсе тапӑнас хӑрушлӑх ҫинчен пӗлтернӗ хыҫҫӑн тумалли ытти ӗҫсене вӗрентесси ҫине уйрӑмах тӗплӗн ҫаврӑнса пӑхмалла. Мӗншӗн тесен, ҫак ӗҫсене пӗлсе организацилени фабрик-заводсене, предприятисемпе учрежденисене пӗр чарӑнусӑр ӗҫлеме май парать, тыл ӑнӑҫлӑн, пӗр чарӑнусӑр ӗҫлени Хӗрлӗ Ҫара ҫапӑҫу фрончӗсенче ҫӗнтерӳ тума пулӑшать.

Тепӗр пысӑк задача вӑл — тӑшман антарса хӑваракан десантсене пӗтерсе тӑкас ӗҫе Осоавиахим членӗсем активлӑн хутшӑнасси пулса тӑрать. Урса кайнӑ фашистла варварсем совет тылӗн ӗҫне дезорганизацилеме тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑйсен ирсӗр планӗсене пурнӑҫлама вӗсем самолетсем ҫине хӗрлӗ ҫӑлтӑрсем туса вӗҫсе килеҫҫӗ, десантсем антараҫҫӗ, парашютистсем пӑрахаҫҫӗ. Фашистсем хӑйсен диверсанчӗсене совет пограничникӗсен, милиционерсен тумӗпе тумлантараҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ фашистла ирсӗрсем тӗрлӗ ултавлӑ майсемпе пирӗн тыла кӗрсе кайса, унта диверсиллӗ ӗҫсем тӑвасшӑн. Анчах вӗсем темле ултавлӑ майсемпе хӑтлансан та, пирӗн Хӗрлӗ Ҫар, совет халӑхӗ вӗсене тыта-тыта пӗтерсе пырать.

Осоавиахим организацийӗсен тӑшман десанчӗсене хирӗҫ кӗрешес ҫӗрте Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсене, НКВД органӗсене пур майсемпе те пулӑшса пымалла. Ҫакна тума осоавиахимовецсен хӑйсен сыхӑлӑхлӑ пулмалла. Ансӑртран килсе тухнӑ кашни шанчӑксӑр ҫын пиркиех тивӗҫлӗ органсене вӑхӑтра пӗлтерсе тӑмалла, вӗсене тытма пулӑшмалла. Чугунҫулсене, ҫыхӑну линийӗсене сыхлас ӗҫе организацилемелле. Уйрӑмах ку ӗҫре ҫӗрлехи вӑхӑтра пысӑк сыхӑлӑхлӑ пулни кирлӗ. Фронт ҫывӑхӗнчи районсенчен тыла куҫарнӑ пурлӑхсене сыхлассине осоавиахимовецсен хӑйсен ҫине илмелле, государство пурлӑхӗ тӑшман аллине ан лектӗр, тӑшман ӑна сиенлеме ан пултартӑр.

Хальхи вӑхӑтра пӗтӗм совет ҫӗршывӗнче халӑх ополченийӗн подразделенийӗсене тӑваҫҫӗ. Халӑх ополченийӗн ретне илме ыйтса заявленисем паракансен йышӗ пирӗн республикӑра та кашни кунах ӳссе пырать, вӗсен йышӗ пиншерӗн шутланать. Осоавиахим членӗсен хисеплӗ тивӗҫӗ, ҫӗршывӑн ытти патриочӗсенни пекех, — халӑх ополченийӗн малти ретӗнче пуласси.

Осоавиахимӑн членӗ, вӑл ку таранччен ҫар ӗҫне вӗренсе ҫитнӗ пулсан, ыттисене ҫар ӗҫне вӗрентес ҫӗрте командованине пулӑшса пымалла. Осоавиахимӑн ҫар ӗҫне вӗренмен членӗсем, халӑх ополченийӗн ретне тӑрса, халех ҫар ӗҫне вӗренмелле, алла пӑшал тытса тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫма хатӗр тӑмалла.

Осоавиахим организацийӗсен пурин те халӑх ополченийӗн ретне тӑма ыйтса заявлени панӑ ҫынсене ҫар ӗҫне вӗрентес ҫӗрте партипе советсен вырӑнти органӗсене пур енӗпе те пулӑшса пымалла. Фашистла вӑрӑ-хурахсене ҫӗмӗрсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫар валли пысӑк резервсем хатӗрлес ӗҫе нихӑҫанхинчен те ытларах вӑйлатмалла. Пирӗн летчиксем, снайперсем, пулеметчиксем, Ворошиловла стрелоксем, радистсем, Хӗрлӗ Ҫара кирлӗ ытти специалистсене йышлӑн вӗрентсе хатӗрлес пулать.

Ӗҫе ҫапла организацилемелле: кашни осоавиахимовец, кашни гражданин, производствӑра пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫленипе пӗрлех, кирлӗ вӑхӑтра алла пӑшал тытса ҫапӑҫава тухма хатӗр пултӑр. Ҫапла ӗнтӗ, Осоавиахим организацийӗсен тӗп задачи — ӗҫҫыннисен сарлака массине ҫар ӗҫне вӗрентессине кӑтартуллӑн йӗркелесси.

Германи фашизмӗ пирӗн юратнӑ тӑван ҫӗршыв ҫине вӑрҫӑпа килсе тапӑннине хирӗҫ ответлесе, республикӑри ӗҫҫыннисем пиншер ҫын Осоавиахим членне кӗчӗҫ, вуншар пин ҫын оборона кружокӗсемпе осоавиахимовецсен групписенче, командисенче тӑван ҫӗршыва сыхлама хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем производствӑра хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ, ҫар ӗҫне те тимлӗн вӗренеҫҫӗ.

Кружоксенче, группӑсенче, командӑсенче вӗренсе илнӗ пӗлӳсене ҫирӗплетес майпа тактикӑллӑ занятисем, ҫӗрлехи походсем, военизированнӑй походсем туса ирттермелле. Ҫаксене пӗтӗмпех Осоавиахим членӗсен вӗренӗвне лайӑхлатас тӗлӗшпе туса пырас пулать. Осоавиахим членӗсем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫсене лайӑхлатни кирлӗ, ҫар ӗҫне вӗрентнипе пӗрлех, вӗсен политикӑллӑ хатӗрленӗвӗн пахалӑхне те ӳстерсех пымалла.

Пӗтӗм оборонӑллӑ обществӑсем умӗнче хӑйсен ретне ҫӗнӗрен пиншер ҫын явӑҫтарас задача тӑрать. Осоавиахимӑн фронта тухса кайнӑ кашни членӗ вырӑнне 5—10 ҫын ҫӗнӗрен явӑҫтарар, ӗҫҫыннисене ҫар ӗҫне вӗрентсе хатӗрлессине вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек туса пырар!

Кашни предприятине, кашни колхоза, кашни учреждение оборона крепӗҫӗ туса хурар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

(1941 ҫулти июлӗн 25-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ)

Июлӗн 25-мӗшӗнче Порхов, Полоцк-Невель, Смоленск тата Житомир енӗсенче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Войскӑсен положенийӗнче нимӗнле пысӑк улшӑнусемех те пулман.

Пирӗн авиаци июлӗн 25-мӗшӗнче противникӑн мотомехчаҫӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ тата унӑн аэродромӗсем ҫине пыра-пыра тапӑннӑ, Констанцӑпа Сулина порчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, июлӗн 24-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсенче нимӗҫсен 34 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 13 самолет пӗтнӗ.

Июлӗн 25-мӗшӗнче ирхине Мускав ҫывӑхӗнчи районсем ҫине нимӗҫсен 6 самолечӗ пырса тухнӑ, вӗсенчен 5 самолетне пирӗн истребительсем персе антарнӑ.

* * *

Ситняран хӗвеланӑҫ енче нимӗҫсен 52-мӗш химически полкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ чухне пирӗн войскӑсем туртса илнӗ документсен шутӗнче Турцин Европӑри пайне тата проливсене ӳкернӗ секретлӑ карттӑсемпе схемӑсен папкине тупнӑ. Тыткӑна лекнисем кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫакна палӑртнӑ: вӑрҫӑ ӗҫӗсем пуҫланиччен 52-мӗш полк Хӗвелтухӑҫ Пруссире тӑнӑ, ӑна унта Балкан таврашӗнчи ҫӗршывсенчен илсе пынӑ. Папка ӑшӗнче «Военно-географические данные о европейской части Турции, включая проливы» текен брошюра пур. Схемӑсемпе карттӑсем ҫине Турцири ҫар объекчӗсене: аэродромсене, арсеналсене, заводсене, портсен сооруженийӗсене тата ыт. те ӳкернӗ. Турци войскисем ӑҫта вырнаҫса тӑнине, вӗсен подвижной составӗ ҫинчен тӗплӗ сведенисене илсе кӑтартнӑ, тинӗс ҫинчен десант антарасси, оккупациллӗ ҫарсемпе штабсене вырнаҫтарасси ҫинчен кӑтартусем панӑ, моторизованнӑй ҫарсене пырса кӗме юрӑхлӑ вырӑнсене кӑтартнӑ. Папка ӑшӗнче сыхланса усраннӑ документсене пурне те Германи ҫарӗн генеральнӑй штабӗ пичетлесе кӑларнӑ. Вӗсене: «службӑра ҫеҫ усӑ курмалла» тесе кӑларнӑ. Ҫав мӗнпур секретлӑ документсем Германи правительствин Турци тӗлӗшӗнчи агрессивлӑ планӗсене татах тепӗр хут тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ.

* * *

Боевой заданине пурнӑҫа кӗртнӗ хыҫҫӑн хӑйӗн аэродромӗ патне ҫывхарса пынӑ чухне, лейтенант Киреев ертсе пыракан скоростной бомбардировщикӑн экипажӗ фашистсен «Юнкерс-88» йышши самолечӗсен звенине асӑрханӑ. Лейтенант тӑшман самолечӗсене ҫийӗнчех атакӑланӑ. Бомбӑсем туллиех тултарнӑ пирки нимӗҫ самолечӗсем маневрсем тума пултарайман. Совет самолечӗн экипажӗ ҫакӑнпа чаплӑн усӑ курнӑ. Штурман лейтенант Чуприн тата стрелок-радист старший сержант Саломатин икӗ «Юнкерса» персе антарнӑ, виҫҫӗмӗшӗ тарнӑ.

* * *

Старший лейтенанта Арсений Дмитриева Н-ски авиачаҫре чӑннипех те паттӑр летчик-истребитель тесе мухтаҫҫӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑн пирвайхи уйӑхӗнче Дмитриев юлташ фашистсен 11 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Красноармеецсен Н-ски чаҫӗ татӑклӑ контратака туса противника Г. пунктран хӑваласа янӑ. Фашистсем Н. юханшывӗ урлӑ каҫмалли пӗртен-пӗр кӗпер патнелле тарнӑ. Старший сержант Зиатханов ертсе пыракан подразделенири боецсем, противника хӑваласа пынӑ чухне, гитлерла офицерсен «паттӑрлӑхне» уҫҫӑн кӑтартса паракан картинӑна курнӑ. Нимӗҫсен пилӗк офицер ларнӑ автомашини кӗпер патнелле пынӑ чухне ҫул ҫинче таракан салтаксене таптаса иртнӗ. Кӗпер ҫине машина пысӑк хӑвӑртлӑхпа пырса кӗнӗ. Нумай салтаксене шыва ӳкере-ӳкере хӑварнӑ. Анчах снаряд тӗл тивнипе автомашина, пассажирсемпе пӗрлех, пӗтнӗ. Нимӗҫ офицерӗсем тарса ҫӑлӑнма хӑтланни ахалех пулнӑ.

* * *

Н. хули патӗнчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен пысӑк ушкӑнне тыткӑна илнӗ. Вӗсенчен туртса илнӗ ҫырусем питех те интереслӗ. Фашистсен цензури вӑйлӑн ӗҫлет пулсан та, Германи салтакӗсем хӑйсен тылри тӑванӗсемпе палланӑ ҫынсен пурнӑҫӗ ҫинчен хуйхӑллӑ хыпарсем илеҫҫӗ. Штабри врач Готельгнасӑн арӑмӗ ун патне ҫапла ҫырать: «Курасчӗ санӑн кунта пурӑнакансене, вӗсем ирхине виҫӗ сехетрен тытӑнсах черетре тӑраҫҫӗ. Мӗн те пулин туянас тесен, тӳрех ыйткаласа ҫӳреме тухса каяс пулать. Лавкасенче нимӗн те ҫук... Эсӗ отпуска килес пулсан, ҫу тавраш илсе кил...» Вахмистра Отто Бритмана ҫапла пӗлтереҫҫӗ: «Аманнисем хулана хӑрушла нумай килсе тӑраҫҫӗ. Вырӑнти масар ҫинче госпитальсенче вилнӗ салтаксен виллисем пит нумай. Мӗн чухлӗ выртса юлаҫҫӗ пулӗ вӗсем ҫапӑҫу пулнӑ ҫӗрте!» Старший ефрейтор Билли Халекӑн арӑмӗ упӑшкине ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: хулара нумай ҫынсене арестлерӗҫ, вӗсем ӗҫ повинноҫӗнчен пӑрӑнаҫҫӗ. Ефрейтор арӑмӗ пурнӑҫ ҫавтери хакланса кайни ҫинчен те ҫырать. Германири тӗрлӗ хуласемпе ялсенчен яракан ҫырусенчен нумайӑшӗ «Хӑҫан пӗтет-ши вӑрҫӑ?» тесе ҫырнипе вӗҫленеҫҫӗ.

* * *

Чехословаки халӑхӗ фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ кӗрешесси ытларах та ытларах сарӑлса пырать. Июлӗн 20-мӗшӗнче Шкода завочӗсенчен кӑларса янӑ хӗҫпӑшалсен эшелонне взрыв туса сирпӗтсе янӑ. Млада-Болеславри, Брнори тата Градец-Краловри ҫар завочӗсенче рабочисене кашни кунах массӑллӑн арестлеҫҫӗ, вӗсене оборудованин тухӑҫне чакарнӑшӑн, станоксене ремонт тӑвассине вӑрӑма тӑснӑшӑн, брак нумай тунӑшӑн арестлеҫҫӗ. Брюннори паллӑ тӗрме, Шпильберг тенӗскер, тулса ларнӑ. Унтан кашни каҫхинех асаплантарса вӗлернӗ чехословаксен виллисене тиенӗ темиҫе грузовик тухса каять. Халӗ фашистсем концентрациллӗ лагерьсем ҫӗнӗрен икӗ лагерь тунӑ, вӗсенче ҫӗршер ҫынсене хупса лартнӑ.

Чехословакири патриотсем, нимӗҫсен юнлӑ репрессийӗсене пӑхмасӑрах, Прага урамӗсенче тата ытти хуласенче гитлерла Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен Совет Союзӗпе Чехословаки хушшинче тунӑ килӗшӳ текстне ҫырнӑ листовкӑсене ҫыпӑҫтара-ҫыпӑҫтара хураҫҫӗ.

* * *

Совет патриоткисем, хӑйсен фронта кайнӑ ашшӗсем, упӑшкисемпе тӑванӗсем вырӑнне тӑнӑскерсем, стахановла ӗҫлеҫҫӗ. Пиншер хӗрарӑмсем производство командирӗсем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем ҫӗнӗ профессисене ӑнӑҫлӑн вӗренсе алла илеҫҫӗ. Ҫамрӑк инженер Ольга Сизова отечественнӑй вӑрҫӑччен Саратоври Халтурин ячӗпе тӑракан фабрикӑра экономист пулса ӗҫленӗ. Халӗ вӑл—шлифовальнӑй цех начальникӗ. Сизова юлташ ертсе пынипе цехри рабочисемпе работницӑсем нормӑсене тӑтӑшах ирттерсе тултараҫҫӗ. Шлифовальщица М. Куделькина кашни кунах икӗ норма ытла тӑвать, К. Серебрякова заданине пӗрре ҫурӑ хут ирттерсе тултарать. Н-ски металлурги заводӗнчи работницӑсем А. Бабенко, П. Протасова, П. Петрякова тата Ю. Жогова юлташсем операторӑн, кран машинисчӗн тата шоферӑн специальноҫӗсене вӗренсе алла илнӗ. Халь вӗсем вальцовщик профессине вӗренеҫҫӗ. Голиковка станцинчи ҫамрӑк стрелочница Л. Шарко икӗ стрелочник вырӑнне ӗҫлет. Вӑл 9 стрелкӑна пӑхса тӑрать, вӗсене яланах кӑтартуллӑ тытса тӑрать. Воронеж облаҫӗнчи Н-ски металлурги заводӗнчи токарь Житкова юлташ пуриншӗн те паллӑ пулса тӑрать. Вӑл 4 станок ҫинче ӗҫлесе кунне 4 норма парать. Челябинскри трактор заводӗнчи работница Анна Овчинникова зуборезнӑй тата долбежнӑй 4 станок ҫинче ӗҫлет. Н-ски кирпӗч заводӗнчи чи лайӑх стахановец Афанасий Дмитриев Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ. Вӑл Гофман кӑмакинче кирпӗч хӗртес тӗлӗшпе пӗтӗм Союзӗпе рекорд тунӑ. Норма тӑрӑх 18 пин кирпӗч хывмалла пулнӑ пулсан, Дмитриев юлташ ертсе пыракан бригада пӗр сменӑра 43 пин кирпӗч хывнӑ. Стахановец-кирпичник вырӑнне работница Мария Кондратьева ӗҫлеме тӑнӑ, кунччен малтан вӑл кирпӗч тӑратас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Вӑл ҫӗнӗ ӗҫе питӗ тӑрӑшса вӗренет. Ҫак кунсенче унӑн бригади кӑмакана 33.840 кирпӗч хывнӑ.

* * *

Июлӗн 23-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле, фашистсен самолечӗсем Мускав ҫине тапӑннӑ вӑхӑтра, Л. Н. Толстой Музей-Усадьбин территори ҫине вут чӗртекен бомбӑсем ҫирӗм ытла пӑрахнӑ. Ҫав кун ҫӗрле дежурствӑра Музей-Усадьба заведующийӗ Теодорович юлташ тата сотрудниксем Гусева, Зубарев, Тюрина, Юнисов тӑнӑ. Вӗсем пушара хӑвӑрт сӳнтернӗ. Музейра ӗҫлекен сотрудниксен пысӑк мар ушкӑнӗ музей ҫуртне тата унӑн экспоначӗсене паттӑррӑн сыхланӑ.

Плана ирттерсе тултараҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ворошилов ячӗпе тӑракан ҫӗвӗ ҫӗлекен артель коллективӗ кулленхи нормӑна 120—130 процент таран тултарса пырать. Григорьевӑпа Гурьева ҫӗвӗҫсем тата тӗрӗ тӗрлекен Михайлова юлташсем нормӑна икӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Вотланти тата Карайри кустпромартельсем те кулленхи нормӑна ирттерсе тултараҫҫӗ.

Ҫак артельсенче санитарнӑй, наблюдательнӑй, стрелковӑй, ПВХО групписем ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрарӑмсем ҫар ӗҫне вӗренме активлӑн ҫӳреҫҫӗ.

С. ФИЛИМОНОВ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградӑлани

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ 1941 ҫулти июлӗн 25-мӗшӗнче кӑларнӑ Указсемпе Германи фашизмне хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюллӑхпа хастарлӑх кӑтартнӑшӑн ҫак юлташсене наградӑланӑ:

Ленин орденӗпе 9 ҫынна наградӑланӑ: майор Ф. Г. Александров. лейтенант В. Г. Бердников, кӗҫӗн сержант Б. И. Карлс, старший лейтенант Ю. Н. Комиссаров, майор С. Ф. Онищук, кӗҫӗн лейтенант Г. Г. Проскурин красноармеец И. И. Исмайлов, кӗҫӗн лейтенант С. А. Музыченко, кӗҫӗн лейтенант М. К. Яковлев.

Хӗрлӗ Ялав орденӗпе — 164 ҫынна,
Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе — 148 ҫынна,

«За отвагу» медальпе — 97 ҫынна тата

«За боевые заслуги» медальпе — 72 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вӑрҫӑ

Англин авиаци министерстви ҫапла пӗлтерет: июлӗн 23-мӗшӗнче Англи бомбардировщикӗсем Германин «Шарнхорст» тата «Гнейзенау» линкорӗсене пит вӑйлӑн атакӑланӑ. Англи бомбардировщикӗсен соединенийӗ июлӗн 23-мӗшӗнче «Шарнхорст» ҫине тапӑннӑ, ун ҫине бронебойнӑй йывӑр бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем карап ҫине тӗл ӳкнине палӑртнӑ.

Июлӗн 24-мӗшӗнче йывӑр бомбардировщиксен соединенийӗ ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Брестра «Гнейзенау» линкора тата Ла-Палиссере «Шарнхорст» линкора атакӑланӑ. Ҫав вӑхӑтрах бомбардировщиксем Шербург портне атакӑланӑ. Германи карапӗсем ҫине темиҫе бомба тӗл ӳкнине палӑртнӑ.

Англи авиаци министерствин коммюникинче ҫапла пӗлтернӗ: июлӗн 24-мӗшӗнче Брестри операцисенче кӑнтӑрла иртсен Америкӑн «Боинг» ятлӑ «вӗҫекен крепоҫӗсем» пулнӑ. «Гнейзенау» ҫине 7 бомба тӗл ӳкнине палӑртнӑ. «Шарнхорст» линкора, «Стирлинг» самолет тапӑнса сиенленӗскерне, июлӗн 23-мӗшӗнче кӑнтӑрла иртсен каллех сиенленӗ. Брестри верфьсене пысӑк сиен тунӑ, унта «Принц Евгений» ятлӑ крейсер тӑнӑ пулнӑ.

Июлӗн 23-мӗшӗнче каҫхине противникӑн ҫар карапӗсене хирӗҫ тунӑ операцисенчен Англин 15 бомбардировщикӗ каялла таврӑнман. Июлӗн 24-мӗшӗнче Англи бомбардировщикӗсем противникӑн 12 истребительне персе антарнӑ. Англи бомбардировщикӗсене хӳтлесе пынӑ истребительсем противникӑн 12 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ. Англин 7 истребителӗ каялла таврӑнман.

Авиаци министерствин информаци бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, июлӗн 24-мӗшӗнче «Гнейзенау» тата «Шарнхорст» линкорсем ҫине бомбӑсем пӑрахни «вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн Англи авиацийӗ кӑнтӑрлахи вӑхӑтра тунӑ чи пысӑк атакӑсем пулса тӑраҫҫӗ».

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, июлӗн 25-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем противникӑн порчӗсемпе тинӗс-ҫар базисем ҫине ҫӗнӗрен пырса тапӑннӑ. Англи бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗ уяр ҫанталӑкра Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Кильри тата Эмденри тинӗс-ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ, унта пысӑк пушарсем тухнӑ тата чылаях пысӑк сиен тунӑ. Ытти соединенисем Вильгельмсхафенри тата Роттердамри объектсем ҫине пырса тапӑннӑ. Англин пилӗк самолечӗ каялла таврӑнман.

Июлӗн 24-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем Ла-Манш проливӗнче противник суднисен вӑйлӑ конвойпа пыракан караванӗ ҫине тапӑннӑ. Противникӑн патрульре ҫӳрекен пӗр суднине путарнӑ, ытти темиҫе суднине сиенленӗ. Англи авиацийӗн ҫухатусем пулман.

Июлӗн 24-мӗшӗнче каҫхине Англи бомбардировщикӗсен соединенийӗ, истребительсем хӳтлесе пынипе, Азбрукри (Ҫурҫӗр Франция) чугунҫул склачӗсем ҫине пырса тапӑннӑ. Ҫав операцисене пула противникӑн 12 истребитель пӗтнӗ, Англи авиацийӗн—6 пӗтнӗ.

Англи авиаци министерствин пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: июлӗн 25-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Германи авиацийӗ Англи ҫинче палӑрмаллах активлӑх кӑтартман. (ТАСС).

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, июлӗн 25-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем противникӑн порчӗсем тата тинӗс-ҫар базисем ҫине ҫӗнӗрен пырса тапӑннӑ. Ҫанталӑк уяр тӑнӑ вӑхӑтра Англи бомбардировщикӗсен соединенийӗ Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ Германи ҫине вӗҫсе пынӑ. Кильри тата Эмденри тинӗс-ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ, унта пысӑк пушарсем тухнипе чылай сиен кӳнӗ. Ытти соединенисем Вильгельмсхафенри тата Роттердамри объектсем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Англин 5 самолечӗ каялла таврӑнман. Англи самолечӗсем Францири аэродромсем ҫине ҫӗнӗрен пырса бомбӑсем пӑрахнӑ.

Чех халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлӗ Германи фашисчӗсене шиклентерет

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Чехословакин Нью-Йоркри пичет бюровӗ ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ, унта ҫапла каланӑ: Германин фашистла влаҫӗсем Совет Союзне хирӗҫ кӗрешме чехсем хушшинче доброволецсем пухма шухӑшламаҫҫӗ. Прагӑран килекен пӗлтерӳсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Совет Союзӗ Германи фашизмне татӑклӑнах ҫӗнтересси пирки чех халӑхӗ ҫирӗппӗн шанса тӑрать. Чехири ҫынсем хушшинче ҫапла шутлаҫҫӗ: нумаях пулмасть Гитлер «Сокол» текен массӑллӑ организацие ӗҫлеме чарса лартнӑ, вӑл унран хӑранӑ, мӗншӗн тесен ҫав организацие пӗрлешнӗ чехсем Германи фашисчӗсем СССР ҫине тапӑннӑ хыҫҫӑн Германие вӑйлӑн хирӗҫ тӑрӗҫ тесе шутланӑ. Чехсем Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ ҫине пысӑккӑн кӑмӑлласа пӑхнӑ пирки Германи влаҫӗсем пур чехсене те, полици ирӗк памасӑр, хӑйсем пурӑнакан вырӑнтан урӑх ҫӗрелле тухса ҫӳреме чарнӑ.

Германири лару-тӑру

Америкӑри «Крисчен Сайенс монитор» хаҫат корреспонденчӗ Лукас, нумаях пулмасть Европӑран таврӑннӑскер, ҫапла ҫырать: шанчӑклӑ ҫӗртен илнӗ сведенисем тӑрӑх Англи авиацийӗ Германи ҫине час-часах пыра-пыра тапӑнни Германи халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлне хыттӑн начарлатать. Англи самолечӗсем Ҫурҫӗр Германи ҫине пырса тапӑннӑ чухне сывлӑшри торпедӑсемпе усӑ кураҫҫӗ, вӑл торпедӑсем калама ҫук пысӑккӑн ҫӗмӗрсе салатаҫҫӗ. Торпедӑсем пӑрахнипе Гамбург, Бремен, Киль хулисенче, Рур тата Рейн облаҫӗсенче питех те пысӑккӑн ҫӗмӗрнӗ. Англи самолечӗсем Бременри Фокке Вульфӑн авиаци чи пысӑк заводне йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Англи самолечӗсем Гамбург ҫине пырса бомбӑсем пӑрахса икӗ дока ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, вӗсенче пилӗк подводнӑй лодка тӑнӑ пулнӑ.

Малалла Лукас ҫапла ҫырать: фашистсене хирӗҫ активлӑн кӗрешесси ӳссех пырать. Заводсенчи рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ вӑйлӑн чакса пырать. Нумай заводсем хальхи вӑхӑтра хӑйсен йӗркеллӗ мощноҫӗн 50 процентӗпе кӑна ӗҫлеҫҫӗ.

Лукас ҫырнӑ тӑрӑх, Совет Союзне хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑ рабочисем хушшинче пӑлханусем кӑларса ярасси патне, ҫавна май вӑрҫӑ производстви чакасси патне илсе пырассинчен Геринг хытӑ хӑранӑ. Заводсен стенисем ҫумӗнче фашистсене хирӗҫ ҫырнӑ листовкӑсем ҫыпӑҫтарни, рабочисемпе гестапо агенчӗсем хушшинче тытӑҫусем пулни ҫинчен пин нумайӑн пӗлтернисем Геринг хӑраса ӳкнине чӑннипех ҫирӗплетеҫҫӗ. (ТАСС).

Берлина аманнӑ салтаксемпе офицерсем пиншерӗн пырса тӑраҫҫӗ

АНКАРА, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Германирен пынӑ ҫынсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Германири халӑх массисем Германи фашизмӗ ССР Союзне хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑ ҫине ҫавтери хыттӑн тарӑхаҫҫӗ, вӗсем ӑна хирӗҫ. Юлашки вунӑ кун хушшинче нимӗҫсен аманнӑ салтакӗсемпе офицерӗсем Берлина кашни кунах 10—12 пиншер ҫын пырса тӑнӑ хыҫҫӑн вӑрҫа хирӗҫ шухӑшсем уйрӑмӑнах пысӑккӑн ӳснӗ.

Баденри армейски корпусӑн пысӑк ҫухатӑвӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: авторитетлӑ вырӑнсенчен илнӗ пӗлтерӳсем тӑрӑх хӗвелтухӑҫ фронтӗнче Баденри армейски корпусӑн пысӑк ҫухатусем пулнӑ. Констанца хулинче тата Баден облаҫӗнчи ытти темиҫе хулара ҫак кунсенче Баден корпусӗн ҫав ҫухатӑвӗсене асӑнса траур флагӗсем ҫакнӑ.

Фашизм--выҫлӑх, ҫуклӑх, чуралӑх, тӗрме. Хурар пӗтӗм вӑя фашизма пӗтерме!

☆

Тӑшмана ҫӗнтеретпӗрех

Сосновка ялӗнчи (Шупашкар р.) колхозниксемпе колхозницӑсем СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Сталин юлташа СССР Оборона Халӑх Комиссарӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартнӑ ятпа пуху туса ирттерчӗҫ. Пухура чи малтан ялсовет председателӗ Медяев юлташ сӑмах тухса каларӗ.

— Сталин юлташ ертсе пынипе эпир граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче интервентсене ҫапса аркатрӑмӑр. Сталин юлташ ятне чӗрере тытса пирӗн чаплӑ Хӗрлӗ Ҫар Маннергейм линине ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Халӗ ҫак отечественнӑй вӑрҫӑра та аслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе пирӗн хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫар юнлӑ фашизма ӗмӗрлӗхех ҫапса аркатасса шанса тӑратпӑр,—терӗ Медяев юлташ.

Унтан 63 ҫулхи колхозник Гаврилов, Калинин, колхозница Родионова юлташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма хатӗр тӑни ҫинчен каларӗҫ.

Колхозниксем тӑшмана ҫӗнтерме Хӗрлӗ Ҫара, Тинӗс-Ҫар Флотне пур майсемпе те пулӑшма пулса сӑмах пачӗҫ. Сосновка ялӗнчи колхозниксем ҫӗнӗ заем укҫине пӗтӗмпех парса татрӗҫ. Государствӑна 85 центнер тырӑ панӑ. Утӑ ҫулса пуҫтарнӑ, тырпула уйхиртен кӗске вӑхӑтра пуҫтарса кӗме хӗрсех хатӗрленеҫҫӗ.

М. СМЕТАНИН.

—o—

Колхозри паянхи ӗҫсем

ҪӖРПУ. «Ӗмӗт» колхоз тырпула пухса кӗме хатӗрленсе ҫитрӗ. Колхозра пурӗ 4 бригада. Колхозӑн тата кашни бригадӑн ӗҫ планӗсем пур. План тӑрӑх 324 гектар ҫинчи тырпула 20 кун хушшинче вырса, кӗлтесене турттарса кӗртсе пӗтерме палӑртнӑ. Колхозӑн ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ.

Тырӑ вырмалли машинӑсене пурне те юсаса, хатӗрлесе хунӑ. Кунсӑр пуҫне ҫава-ҫурласене те йӗркеленӗ. Авӑч ҫапмалли машинӑсем пилӗк, вӗсем пурте юсавлӑ. Колхозӑн транспорчӗ тирпейлӗ. Кашни ӗҫлекен лаша валли кӳлмелли хатӗрсем ҫителӗклӗ хатӗрлесе хунӑ.

Кашни бригадӑрах витнӗ итемсем пур. Тырӑ турттармалли михӗсем 300 ытла. Амбарсене, складсене тасатса дезинфекци туса ҫитернӗ.

Уборка вӑхӑтӗнче пӗрле апатланмалли столовӑй тата ачасем валли яслӗ пулать. Ачасене пӑхма ҫынсем уйӑрнӑ.

Пирӗн колхоз иртнӗ ҫулта гектартан вӑтам шутпа 16,6 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Кӑҫал колхозниксемпе колхозницӑсем гектартан 20 центнер таран туса илме ӗмӗтленеҫҫӗ.

Эпир государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарма тӑрӑшатпӑр. План тӑрӑх колхозӑн кӑҫал 173 центнер тырӑ памалла. Вӑл шутран кивӗ тырӑ запасӗнчен 164 центнер патӑмӑр.

Колхозра общественнӑй пурлӑха вутхӑвартан сыхлассине тимлӗн йӗркелеме тӑрӑшатпӑр. Хуралҫӑсем лайӑх сыхлаҫҫӗ. Шыв лартма 500 витре кӗрекен чан турӑмӑр. Колхоз 1940 ҫулти ноябрь уйӑхӗнче клуб тума тытӑннӑччӗ. Халӗ ӑна туса ҫитертӗмӗр.

Колхозниксемпе колхозницӑсем тырпул тухӑҫне ҫулленех ӳстерсе пырассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Кӑҫал уя тӗрлӗрен минерал ҫӑпӑхӗсем 33 тонна кӑларнӑ. Иртнӗ ҫулта тӑкнӑ хисеппе танлаштарсан, вӑл виҫӗ хут ытларах пулать. Тислӗк, торф тата кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗсене кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен икӗ хут ытларах кӑларнӑ.

ТИХОНОВ.
«Ӗмӗт» колхоз председателӗ.

☆ ★ ☆

КОЛХОЗНИКСЕН СТАХАНОВЛА ӖҪӖ

ҪӖМӖРЛЕ. (**«Чӑваш Коммуни» корр.**). Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз — районра малта пыракан колхозсенчен пӗри. Иртнӗ ҫулта вӑл вӑтамран кашни гектар пуҫне 17,8 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Уйрӑм культурӑсем тӑрӑх илсен унран та пахарах результатсем курӑнаҫҫӗ. Сӑмахран, ыраш гектартан 22 центнер илнӗ.

Колхоз тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыни вӑл колхозниксем тӑрӑшнинчен килет. Колхозниксен ӗҫри хастарлӑхӗ ҫавтери пысӑк. Вӗсем кашниех колхоз производствинче активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ, пур ӗҫе те вӑхӑтра тӑваҫҫӗ. Кӑҫал ҫанталӑк йӗпе тӑчӗ пулин те, колхоз ҫуракине кӗске вӑхӑтра, пысӑк пахалӑхпа вӗҫленӗ.

— Кӑҫал ӗнтӗ эпир гектартан 20 центнертан кая мар туса илесшӗн. Ӑна шансах тӑратпӑр, тырпул лайӑх ҫитӗнет, — теҫҫӗ колхозниксем савӑнса.

Ҫак кунсенче колхоз тырпулсем ҫинчи ҫумкурӑксене тасатса пӗтерчӗ. Халӗ хӗрсех утӑ ҫулаҫҫӗ. Ӗҫлеме пултаракансем пурте тухнӑ. Арҫынсен кунне 0,35 гектар, хӗрарӑмсен 0,20 гектар ҫулмалла. Ҫак нормӑна кашни колхозникпа колхозница ытлашшипех тултарать. Алексей Пимашин, Дмитрий Байков, Яков Гуляшов колхозниксем куллен 0,40 гектар е ытларах та ҫулаҫҫӗ. Мария Пимашина, Татьяна Солдатова тата Анастасия Юданова кӑҫалччен утӑ ҫулса курман. Кӑҫал вӗсем, Хӗрлӗ Ҫар ретне кайнӑ арҫынсен вырӑнне тӑрса, утӑ ҫулнӑ ҫӗрте паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ, кашниех нормӑна 120—130 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Уйра хӗрӳллӗ ӗҫ пынӑ вӑхӑтрах колхозниксем тухӑҫлӑ тырпула уйран пӗр тӑккаламасӑр пуҫтарса кӗртме хатӗрленеҫҫӗ. Паянхи куна жнейкӑсемпе молотилкӑсене, лаша таврашӗсене хатӗрлесе ҫитернӗ, михӗсем, ҫурласем те ҫителӗклӗ. Ҫурласене пурне те шӑлланттарнӑ. Ҫитес кунсенче яслӗ уҫӑлать, столовӑй тахҫанах ӗҫлет. Пӗр сӑмахпа каласан, колхоз уборкӑна тухма хатӗр.

— Тырӑ вырнӑ ҫӗре ваттисем те, шкул ачисем те хутшӑнаҫҫӗ. Ватӑрах хисене эпир ҫӑмӑлтарах ӗҫсем паратпӑр. Ӗҫ пурне валли те ҫитет. Машинӑсемпе вырнипе пӗрлех, пирӗн чылай колхозниксем тырпула ҫурлапа вырмалла,—тет колхоз председателӗ.

Колхоз государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен пурнӑҫлать. Колхозниксем ҫакна лайӑх пӗлеҫҫӗ: гитлерла бандитсене ҫапса аркатма Хӗрлӗ Ҫара куллен пулӑшса пымалла. Ҫак пулӑшӑва вӗсем колхоз производствинче тӳрӗ кӑмӑлпа, стахановла ӗҫлени-пе, государствӑна тӗштырӑ, сӗт-ҫу, аш-какай панипе кӑтартаҫҫӗ. Паянхи куна колхоз кӑҫалхи ҫулшӑн аш-какай, ҫӑм, ҫӑмарта тата сӗт-ҫу памалли плана ытлашшипех тултарнӑ тата кивӗ тырӑран кӑҫал памалли плана 70 процент ытла тултарнӑ. Тырӑ ҫитес кунсенчех парса татаҫҫӗ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстерсе пырас тӗлӗшпе те юлашки вӑхӑтра чылай улшӑнусем турӗ. План тӑрӑх унӑн 56 лаша, 45 ӗне, 50 сурӑх, 70 чӑх пулмалла пулсан, халӗ лаша 63, ӗне 58, сурӑх 51 пур. Сӗт-ҫу ферми уйрӑмӑнах тухӑҫлӑн ӗҫлет, вӑл сӗт суса илмелли плана кашни уйӑхрах ирттерсе тултарать. Акӑ март уйӑхӗнче пӗтӗмпе 3086 литр суса илмелле пулнӑ, 3246 литр илнӗ, апрельте 3482 литр вырӑнне 3699 литр, май уйӑхӗнче 3755 литр вырӑнне 4721 литр, июньре 4199 литр суса илес вырӑнне 4563 литр сунӑ. Доярка Анна Антишина июль уйӑхӗнче планпа палӑртнинчен 200 литр ытлашши суса илнӗ. Агриппина Оборина та сӗт сумалли плана ытлашшипех тултарса пырать. Вӗсем ӗнтӗ ВКП(б) Центральный Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх чылай сӗт-ҫу илме тивӗҫлӗ.

Выльӑх-чӗрлӗхсем валли вите-сарайсем ҫителӗклӗ. Вӗсем таса та илемлӗ. Кӑҫал ҫӗнӗрен 30 пӑру вырнаҫмаллӑх вите тата сурӑхсем валли вите тӑваҫҫӗ.

Колхоз кӑҫал 400 тонна ытла кӗрекен элеватор, горючи хумалли хранилище тата ледник туса пӗтерчӗ. Ҫак ӗҫсене ӗнтӗ пӗтӗмпех колхозниксем хӑйсен вӑйӗпе тунӑ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоза 50 ҫулхи колхозник Никифор Тихонович Ежов ертсе пырать. Правлени председателӗ пулса вӑл пиллӗкмӗш ҫул ӗҫлет. Малтанхи ҫулсенчех ӗҫре хӑшпӗр ҫитменлӗхсем те пулнӑ. Анчах тӑрӑшса, большевикла хастарлӑхпа ӗҫлени ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшнӑ. Колхоз председателӗ чӑн малтанах ӗҫре хӑй пример кӑтартнӑ, вӑл ытти колхозниксене ӗҫе мобилизациленӗ.

Председатель колхозниксем хушшинче авторитетлӑ. Вӑл каланине кашни колхозник тӳррӗн пурнӑҫлать. Хальхи вӑхӑтра ӗҫри хастарлӑх татах та ӳсрӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем, гитлерла бандӑсене ҫапса ҫӗмӗрме паттӑр Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас тесе, колхоз производствинче ырми-канми, нихӑҫанхинчен хастарлӑрах ӗҫлеҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

Шупашкарти автомобильсем юсакан заводри заказсен сӗтелӗн заведующийӗ Мартяшев юлташ фронта кайнӑ, ун вырӑнне халиччен табельщицӑра ӗҫленӗ А. Д. Коновалова юлташ йышӑннӑ. **Ӳкерчӗк ҫинче:** А. Д. Коновалова юлташ.

Е. Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

☆

Ҫулпуҫ чӗннине ӗҫпе ответлеҫҫӗ

ИЕПРЕҪ. Сталин юлташ тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкмашкӑн халӑхӑн мӗнпур вӑйӗсене хума тата Хӗрлӗ Ҫара, Хӗрлӗ Флота Совет Авиацине пур майсемпе те пулӑшса пыма чӗннине районри ӗҫҫыннисем ӗҫпе ответлеҫҫӗ. Предприятисемпе промартельсенче производство планӗсене, колхозсенче государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарас, уборкӑна кӑтартуллӑн хатӗрленес ӗҫ сарӑлса пырать.

«Коминтерн» колхозра обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, унӑн продуктивлӑхне ӳстерес ӗҫе лайӑх организациленӗ. 1941 ҫулта государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем тӑрӑх 113 процент, лашасем енӗпе 106 процент, сыснасем енӗпе 147 процент, сурӑхсем енӗпе 220 процент, чӑх-чӗпсем ӗрчетес тӗлӗшпе 125 процент тултарнӑ. Кашни сурӑхран 4 килограмм ҫӑм касса илес вырӑнне 5,75-шер килограмм касса илнӗ.

1941 ҫулта государствӑна аш-какай памалли плана тултарнӑ. Колхозниксем те, 157 килограмм аш-какай парса, плана 100 процентчӗпех пурнӑҫланӑ.

Димитров ячӗпе тӑракан колхоз июлӗн 14-мӗшӗнче государствӑна утӑ тӑратас плана районра чи малтан тултарчӗ. «Красный водник», «Эконом», «Молния», «Правда» колхозсем те государствӑна утӑ парса татрӗҫ.

«Правда» колхоз ҫитес ҫулта вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешет, кӗраҫине лайӑх хатӗрленет. Ирхи ҫӗртмене вӑхӑтра туса хӑварнӑ, вӑхӑтра культиваци тунӑ, халь ирхи ҫӗртме уйне иккӗмӗш хут сухалаҫҫӗ. Ҫӗртме уйне ҫавӑн пек лайӑх пӑхса тӑнипе унта пӗр ҫумкурӑкӗ те ҫук. Ҫак иртнӗ 10—15 кун хушшинче ҫӗртме уйне 1200 лав тислӗк кӑларнӑ.

Районри ӗҫҫыннисем, ҫулпуҫ чӗннине, заем укҫине срокчен тӳлесе татнипе ответлеҫҫӗ. Кашни рабочипе служащи, кашни колхозникпе колхозница Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма тӑрӑшать. Колхозниксемпе единоличниксем заем укҫине июль уйӑхӗнче 38 пин тенкӗ тӳленӗ пулсан, июль уйӑхӗн малтанхи вунӑ кунӗ хушшинче кӑна 26.588 тенкӗ пухнӑ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем июлӗн 17-мӗшӗнче заем укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татрӗҫ. Ватӑ колхозник Степан Железнов (унӑн 3 ывӑлӗ Хӗрлӗ Ҫарта) заем укҫине тӳлесе татнӑ хыҫҫӑн ҫапла каларӗ:

— Манӑн ывӑлсем тӑван ҫӗршыва сыхлаҫҫӗ. Заем укҫине срокчен тӳлесе татни — тӑшмана ҫапса салатма пулӑшни пулать. Тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма мӗнпур вӑя хурар! — терӗ вӑл.

Буинск посолокӗнчи килхуҫи хӗрарӑмӗсем Германи фашизмӗн ирсӗр ӗҫне хирӗҫ заем укҫине срокчен тӳлесе татнипе ответлеҫҫӗ. Евдокия Сосновская, Татьяна Руссанова, Самохвалова тата ыттисем те заем укҫине пӗтӗмӗшпех тӳлесе татрӗҫ.

Кировски ялсоветӗнчи заем уполномоченнӑйӗ М. Степанов юлташ ҫак иртнӗ 5—6 кун хушшинче 1435 тенкӗ заем укҫи пухса панӑ.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Выльӑх-чӗрлӗх валли витесем тӑваҫҫӗ

СОВЕТСКОЕ. «Хастар» колхозра выльӑхсем валли витесем тӑвас тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Ятарласа строительство бригади организациленӗ. Бригада хӑйӗн ӗҫне тимлӗн тытӑнчӗ. Бригадӑра ӗҫлекен колхозниксем кӗске вӑхӑтрах сысна ферми валли кухня тата чӑх-чӗпсене усрамалли вите туса пӗтерчӗҫ.

Строительство бригадинчи колхозниксем В. Осипов, Е. Никифоров юлташсем кулленхи нормӑна 120 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

В. ПРОКОПЬЕВ.

Фашистсем йышӑннӑ районсенчи ӗҫҫыннисем, выльӑх-чӗрлӗхе тӑшмана валли хӑварас мар тесе, хӑваласа илсе каяҫҫӗ

Л. Великжанин фото-ӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Парторганизацисем хӑйсен ӗҫне ҫӗнетсе урӑхлатаҫҫӗ

Ҫак кунсенче ВКП(б) Шӑхасан районӗнчи организацин пухӑвӗ пулса иртрӗ. ВКП(б) райком секретарӗ Г. Захаров юлташ хальхи вӑхӑтра парторганизацисем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Пурне те фронт валли! Фашизма ҫӗмӗрсе пӗтерес ҫӗре хамӑрӑн мӗнпур вӑйсене хурар! Ҫак лозунгпа ӗҫлет хальхи вӑхӑтра районри парторганизаци. Чылай пуҫламӑш парторганизацисем хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнланса илнӗ. Вӗсем хӑйсен пӗтӗм ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ҫӗнетсе урӑхлатнӑ.

Шӑхасанти машинно-тракторнӑй станцинчи пуҫламӑш парторганизаци ертсе пынипе, МТС тырпулсене пухса кӗме хатӗрленсе ҫитрӗ: 19 комбайна, тракторсемпе ытти ялхуҫалӑх машинисене юсаса лартнӑ, кадрсем кирлӗ таранах пур. Трактористсем хушшинче стахановла движенине анлӑн сарса янӑ. ВКП(б) членӗн кандидачӗ И. Моисеев юлташ ертсе пыракан бригада ҫулталӑкри ӗҫсен планне халех 85 процент тултарнӑ, 2559 килограмм горючи перекетленӗ. ВКП(б) членӗн кандидачӗ Емельянов юлташ тракторпа ӗҫлемелли ҫулталӑк планне 97 процент, П. Максимов юлташ 75 процент тултарнӑ. Беспартийнӑйсем Я. Сергеев, Н. Краснов тата партин кандидачӗ С. Тимофеев ертсе пыракан бригадӑсем те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Горючисене тирпейлӗн тыткалассишӗн, вӗсене перекетлессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада кӑна кӑҫалхи ӗҫсене тунӑ вӑхӑтра 2162 килограмм горючи перекетленӗ, Пальмов бригади 1570 килограмм перекетленӗ, МТС пӗтӗмпе 14381 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

МТС-чи комсомол организаци лайӑх ӗҫлеме пуҫларӗ. Комсомолецсемпе ҫамрӑксем тӑрӑшнипе кӑна ҫак кунсенче тонна ытла тимӗр-тӑмӑр пухса панӑ.

Парторганизаци рабочисемпе служащисем тата трактористсем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑхлатрӗ. Кашни ирех тата пушӑ вӑхӑтсенче хаҫатсенчи материалсем тӑрӑх политинформацисемпе калаҫусем туса ирттереҫҫӗ. Пухусенче хальхи вӑхӑтри задачӑсем ҫинчен сӳтсе-яваҫҫӗ.

Ӗҫри паттӑрлӑх ӳсет. Комбайнерка В. Васильева юлташ кӑҫал «Коммунар» комбайнпа 300 гектартан кая мар тырпул пухса кӗме сӑмах панӑ, малтанхи ҫулсенче трактор ҫинче ӗҫленӗскерсем, пурӗ 8 хӗрача, вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн каллех трактор ҫинче ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Ҫӗнӗрен 35 хӗрача трактор ҫинче ӗҫлеме вӗренме кӗчӗҫ. Слесарсемпе механиксем: Северов, Осипов, Альфонцев юлташсем ялхуҫалӑх машинисене юсанӑ чухне плансене 150-шар процент тултарса ӗҫлекен пулчӗҫ.

Шуркасси ялсовет исполкомӗнчи пуҫламӑш парторганизаци ертсе пынипе «Большевик», «1-ое Мая», «Борец» колхозсем тырпулсене пухса кӗртме районра чи малтан хатӗрленсе ҫитнӗ. Ялсоветри колхозсем утӑ ҫулса тирпейленӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫалхи обязательство шучӗпе государствӑна 163 центнер тӗштырӑ, 10-центнер аш-какай, 25 пин ҫӑмарта панӑ. Ялсоветри колхозсем государствӑна ҫӑм парса татнӑ. Колхозниксем те хӑйсен парӑмӗсене срокчен парса татаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш Пятилеткӑн (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑм) Заемӗшӑн ҫак кунсенче кӑна 12.200 тенкӗ укҫа пухнӑ. Районӗпе илсен 21 колхозри колхозниксем заем укҫине тӳлесе татнӑ. Умра тата ответлӑрах, хисеплӗрех задачӑсем тӑраҫҫӗ. Кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне нихҫанхи пек мар пысӑк пахалӑхпа ирттересси, государствӑна тырпул, пахча-ҫимӗҫсем тӑратасси, ӗҫҫыннисене ҫар ӗҫне вӗрентесси, вӗсем хушшинче революциллӗ сыхӑлӑха хӑпартасси, тылри дезорганизаторсене хирӗҫ пӗр хӗрхенӳсӗр кӗрешесси — пирӗн умра тӑракан пысӑк ӗҫ пулса тӑрать.

В. ЧЕРНОВ.

ВКП(б) Шӑхасан райкомӗн оргинотрукторски отдел заведующийӗ.

—o—

Ытларах тырӑ, аш-какай, сӗт-ҫу, ҫӑмарта парса Хӗрлӗ Ҫара пулӑшатпӑр

ИЕПРЕҪ. Шӑртан ялсоветне кӗрекен «Социализм» колхозӑн государствӑна план тӑрӑх 2.122 литр сӗт памалла пулнӑ. Колхоз паянхи куна 4.320 литр панӑ. Колхоз сӗт поставки тӑрӑх иртнӗ ҫулсенче парса татман парӑмсене те халӗ пӗтӗмпех парса татнӑ, аш-какай парас тӗлӗшпе квартал планне тултарнӑ.

Колхозра сӗт, ҫӑмарта, аш-какай, ҫӑм парса татнӑ колхозниксем вунӑшарӑн шутланаҫҫӗ.

Фермӑра ӗҫлекенсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫӗн государство планне тултарассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Ӗне, сурӑх фермисем хӑйсен планӗсене тултарнӑ. Фермӑра 25 ӗне пулмалла, халӗ унта 27 ӗне пур. Пӑрусем—12. Планпа палӑртнӑ тӑрӑх, кашни пӑру куллен 450 грамм хутшӑнса пымалла, вӗсен чӗр виҫи вӑтамран кунсерен 520 грамм хутшӑнса пырать.

«Зойка», «Дочка» ӗнесем кашни кун 12-шер литр сӗт параҫҫӗ.

Ф. КИРИЛЛОВ.

* * *

ҪӖМӖРЛЕ Пренешри «Майӑн 1-мӗш» колхоз государство умӗнчи парӑмсене срокчен парса татассишӗн кӗрешет. Колхоз 7 пин литр сӗт панӑ. Сӗт памалли обязательствӑна пӗтӗмпех тултарнӑ.

Утӑ ҫулса пӗтернӗ хыҫҫӑн, колхоз государствӑна 4 тонна утӑ панӑ, плана 100 процентчӗпех пурнӑҫланӑ.

Халӗ колхоз государствӑна тырӑ парать. Ҫак кунсенче 130 центнер тырӑ леҫсе панӑ.

С. БАТЬКОВ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районра чылай колхозсем 1941 ҫулшӑн государствӑна тырӑ пама пуҫларӗҫ. Калинин ячӗпе тӑракан колхоз тӗштырӑ памалли плана 67 процент тултарнӑ. Кунсӑр пуҫне колхоз аш-какай, ҫу, ҫӑм обязательствисем тӑрӑх та плана 100 процентчӗпех пурнӑҫланӑ. «Комсомолец» колхоз кӑҫалхи ҫулшӑн тырӑ пӗтӗмпех парса татнӑ.

Аш-какай тӑратас тӗлӗшпе Тимошенко ячӗпе тӑракан, «Красная Чувашия», «Социализм» колхозсем те малта пыраҫҫӗ.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нӑрваш Шӑхаль ялсоветне кӗрекен «Восход» колхоз государство умӗнчи парӑмсене тултарас тӗлӗшпе районра ытти колхозсенчен малта пырать. Колхоз паянхи кун тӗлне аш-какай, сӗт, ҫӑм, ҫӑмарта парса татнӑ. Ҫавӑн пекех тырӑ, кантӑрвӑрри пама тытӑннӑ.

Колхозниксем кӑҫал 3.565 тенкӗлӗх заем ҫырӑнса илчӗҫ. Халӗ вӗсем заем укҫине пӗтӗмпех тӳленӗ.

И. МИТРОФАНОВ.

* * *

Районсенче государствӑна сӳс-кантӑр парас ӗҫ сарӑлса пырать. Калинински районра Калинин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна 6.442 килограмм, Элӗк районӗнчи «Доброволец» колхоз — 4.846 килограмм, Красноармейски районри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз — 1.782 килограмм сӳс-кантӑр панӑ.

Ф. ПРИКОВ.
Н. ГРИГОРЬЕВСКИЙ.

Тылри хӗрӳллӗ кунсем

Комсомолӑн Тимӗрҫкассинчи «Прожектор» колхозри пуҫламӑш организаци секретарӗ Василий Васильев, ҫамрӑксене пухса, тӑшмана ҫӗнтерме танксем, тупӑсем, пулеметсем тата ытти хӗҫпӑшалсем ытларах кирли ҫинчен каласа пачӗ:

— Кашни килте усӑсӑр выртакан тимӗр-тӑмӑр пур. Эпир ӑна пухса фронта пулӑшма пултаратпӑр, тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтеретпӗр.

Ҫамрӑксем пурте унӑн шухӑшӗпе килӗшрӗҫ. Икӗ бригада организацилесе тимӗр-тӑмӑр пухма килӗрен тухса кайрӗҫ.

Ҫамрӑксене колхозниксем ырӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ. Вӗсем хӑйсен килӗсенче фронта валли паха тимӗрсем тупса пачӗҫ.

— Ҫак тимӗр фашистсен пуҫӗсене ҫапса аркатнӑ ҫӗре кайтӑр. Хӑвӑртрах ӑна заводсене ҫитерме тӑрӑшӑр, шӑранса вӑл танк, тупӑ, снаряд пулса тухтӑр.

Кӑҫхи кӳлӗм тӗпер хут ҫамрӑксем пӗрле пухӑнса, мӗн чухлӗ тимӗр-тӑмӑр пухнине шута илчӗҫ. Пӗтӗмпе 300 килограмм пухӑннӑ. Тимӗр-тӑмӑр пухнӑ ҫӗрте Василий Васильев, тракторист Мефодий Гордеев, Шупашкарти педучилищӗре вӗренекен студент Василий Яковлев, Йӑлкӑшри туллимар вӑтам шкулта 5-мӗш класра вӗреннӗ ача Иван Григорьев тӑрӑшса ӗҫленӗ.

Пухӑннӑ тимӗр-тӑмӑра ҫывӑхри чугунҫул станцине леҫрӗҫ. Унтан ӑна пӗр-пӗр завода тиесе яраҫҫӗ.

* * *

«Прожектор» колхозри Агриппина Максимова мухтавлӑ хӗрсенчен пӗри шутланать. Конюх вӑл. Лашасене юратса пӑхать. Вӑл пӑхакан лашасем мӑнтӑр та таса. Сӑмах ун ҫинчен мар, колхоз председателӗ хушнӑ ӗҫсене е бригадир панӑ урӑх нарядсене тӳрӗ кӑмӑлпа тата ӑна ҫийӗнчех пурнӑҫа кӗртни ҫинчен пырать.

Вӑл пӑхакан лашасем ӗҫе кайнӑ. Ун хыҫҫӑнах вӑл витене тасатнӑ. Урӑх мӗн тӑвас? Ахаль тӑрас килмест.

Агриппина Максимова колхоз председателӗ патне пырса кӗрет.

— Павел Макарч, эпӗ халӗ хамӑн ӗҫе пӗтӗмпех пуҫтарса пӗтертӗм. Пӗр сӑр витере манӑн нимӗн тумалли те ҫук. Ҫак хушӑра колхозри урӑх ӗҫсем патне тухас тетӗп, сирӗнтен пӗр-пӗр наряд илме килтӗм.

— Наряд? Эпӗ халӗ кӑна бригадирсене утӑ ҫулма тухма наряд парса ятӑм. Хӑвӑртрах утӑ пухса кӗртсе, ӑна государствӑна тӑратмалла пулать. Кай утӑ ҫулма. Икӗ алла пӗр ӗҫ, ҫакӑ уяр ҫанталӑкра кӗске вӑхӑтра утӑ пухса кӗртӗпӗр.

Павел Макаров, «Прожектор» колхоз председателӗ, Агриппина Максимова ҫинчен ҫапла каласа парать.

— Мухтавлӑ хӗр. Нимӗнле ӗҫрен те пӑрӑнса тӑмасть. Хӑйӗн пушӑ вӑхӑт тупӑнсан тӳрех канцелярине, ман патӑма чупса пырать, пӗр-пӗр ӗҫ тупса пама ыйтать. Маттур хӗр, ывӑнма пӗлмест.

Унӑн ӗҫ кӗнеки ҫинче 340 ӗҫкунӗ шутланать. Паян вӑл, ытти колхозниксемпе пӗрлех, вырӑнти ҫулйӗрсене юсама тухнӑ. Вырӑнти лайӑх ҫулйӗрсем тырпула кӗске срокра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртме май параҫҫӗ.

* * *

— Пурне те фронта валли, пурте ҫӗнтерӳ тума! — ҫак лозунг кашни колхозника хавхалантарса ҫӗклет. Кашни сӑмах,— колхозник тӑшмана ылханса илет: «Тӗп пултӑр фашизм!»

Кӗлетсем умӗнче колхозниксем государствӑна пама тырӑ тасатаҫҫӗ. Ҫамрӑксем те пур кунта. Колхоз председателӗ килсе ҫитет. Ӑна ҫамрӑксем сӑрса илеҫҫӗ.

— Павел Макарч, тырӑ леҫме эпӗ те пӗр хут каятӑп. Манӑн вырӑна урӑх никама та ан палӑртӑр. Юрӗ-и?—ыйтать Иосиф Курмашев, Элӗкри вӑтам шкулти 8-мӗш класра вӗреннӗ подросток.

— Юрӗ, юрӗ. Эсех каятӑн, тыррине хӑвӑртрах тасатса ҫитерӗр. Ыран ирех Вӑрнара тухса каймалла пулать.

Государствӑна иртнӗ ҫулхи запасран паха, таса тырӑ пама тӑрӑшаҫҫӗ. Кашни центнер тырӑ тӑшмана отпор пани пулать. Ҫакна колхозниксем лайӑх ӑнланса илнӗ.

Колхоз ку вӑхӑтчен государствӑна 98 центнер тӗштырӑ панӑ. Ку хутра колхоз государствӑна тырӑ тӑратас плана, ырашсӑр пуҫне, 100 процент тултарса килет.

* * *

Колхозра та, фронтри пекех, хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Колхозниксем пурте тӑван ҫӗршывшӑн, ирӗклӗхшӗн, чыслӑхшӑн, фашистла ҫӑткӑнсене тӗппипех ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн тимлӗн кӗрешеҫҫӗ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Тимӗрҫкасси, Элӗк р.

УТРАВ ҪИНЧЕ

Шупашкар тӗлӗнче пӗр пысӑк утрав пур. Ӑна пӗр енчен Атӑл, тепӗр енчен затон шывӗ унка пек хупӑрласа тӑраҫҫӗ. Утрав ҫийӗ ҫавтори илемлӗ, вырӑн-вырӑн хӑва, йӑмра тӗмисем ӳсеҫҫӗ. Пуринчен те илемли тата хакли — вӑл утӑ ҫулмалли ҫаран.

— Ҫуркунне каярах юлса килчӗ пулсан та, кӑҫалхи пек вӑйлӑ курӑк сайра ҫулсенче пулать. Пӑхӑр-ха, лаша хырӑмайӗ таран! — тесе мухтать «Ударник» колхоз членӗ Иван Николаевич Филиппов юлташ. Филиппов юлташ 55 ҫула ҫитнӗ. Германи вӑрҫинче пулнӑ, граждан вӑрҫинче шуррисене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Икӗ хутчен суранланнӑ. Ҫапах та ҫирӗп старик. Утӑ ҫулнӑ ҫӗрте ҫамрӑксенчен юлмасть. Филиппов юлташӑн икӗ кинӗ хӑйпе пӗрле ӗҫлеҫҫӗ.

— Иртнӗ ҫул эпӗ утӑ ҫулман. Кӑҫал икӗ ывӑла вӑрҫа — фашистсене ҫӗмӗрсе тӑкма ӑсатрӑм. Ҫавӑнпа ывӑлсем вырӑнне хам ӗҫлетӗп. Вӑй пур-ха, — тет вӑл.

Акӑ инҫе те мар «Партизан» колхоз членӗсем утӑ ҫулаҫҫӗ. Кунта мӗнпурӗ 24 ҫын, вӗсенчен 18 хӗрарӑм. Ав, Ольга Петровна Чекалина юлташ ҫулакан машина ҫинче ларса пырать. Вӑл пуҫне хӗрлӗ тутӑр ҫавӑрса ҫыхнӑ, ҫийӗнче шап-шурӑ кӗпе. Лаша тилхеписенчен ҫирӗп ҫавӑрса тытнӑ:

— Ну, ну, — тесе лашисене хӑвалать. Метр ҫӳлӗшӗ курӑк хыҫала йӑванса юлать.

— Иртнӗ ҫул машинӑпа унӑн упӑшки ҫулатчӗ. Кӑҫал арӑмӗ ҫулать, мӗншӗн тесен унӑн упӑшки Хӗрлӗ Ҫарта фашистсемпе кӗрешет, — тесе пӗлтерчӗ колхоз председателӗ Осипов юлташ.

Утрав ҫинче ӑҫта пӑхнӑ унта хӗрлӗ, кӑвак, симӗс тутӑрлӑ, шурӑ кӗпеллӗ хӗрарӑмсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен чылайӗшӗн упӑшкисем Хӗрлӗ Ҫарта фашистсене хирӗҫ тӑрса кӗрешеҫҫӗ.

— Иртнӗ ҫулсенче эпӗ утӑ ҫулма ҫӳремен. Упӑшка ӗҫлетчӗ. Кӑҫал вӑл вӑрҫӑра. Ун вырӑнне хам ӗҫлетӗп, — тесе пӗлтерчӗ Фекла Ивановна Кускова юлташ. Унӑн 2 ача, пӗри — 8 ҫулта, тепри — пилӗкре. Вӗсем те амӑшӗпе пӗрле утрав ҫинче утӑ ҫулнӑ ҫӗрте кӗрепле сӗтӗрсе ҫӳреҫҫӗ. Утӑ пуҫтараҫҫӗ.

Утрав ҫинче, утӑ пуҫтарнӑ ҫӗрте, хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Кӑнтӑрла кунӗпе ҫава, машина сасси кӗрлесе тӑрать. Каҫ пулсан вара ҫамрӑксем юрлама, ташлама пуҫланаҫҫӗ. Ҫавӑнтах хуткупӑсӗ, балалайки тата ыттисем те.

Уяр ҫанталӑк тӑрсан утрав ҫинчи ҫак кунсенчех утӑ пуҫтарса пӗтерӗҫ. Ҫын сассисем лӑпланӗҫ. Капансем анчах юлӗҫ. Кашни килограмм утӑ, кашни килограмм тырӑ колхоз пурлӑхне ӳстерет, государствӑна пулӑшать. Утӑ типсе пырать, колхозниксем пӗринчен тепри ӑмӑртса государствӑна утӑ парса татма тӑрӑшаҫҫӗ. «Ударник» колхоз 75 процент парса татнӑ та ӗнтӗ.

— Ҫак эрнере пӗтӗмпех парса тататпӑр, — тесе пӗлтерчӗ колхоз председателӗ Семенов юлташ.

Атӑл урлӑ кашни кун вуншар лав утӑ каҫать. Вӑл утӑ — государство валли. Анчах Шупашкарти утӑ хатӗрлекен пункт колхозниксенчен утӑ йышӑнма кирлӗ таран хатӗрленсе ҫитеймен, мӗншӗн тесен йышӑннӑ ҫӗрте, виҫнӗ ҫӗрте питӗ майӗпен мӗшӗлтетеҫҫӗ. Утӑ леҫме пынӑ колхозниксене нумай кӗттереҫҫӗ. Хальхи хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче колхознике пӗр сехет ытлашши тӑни те питӗ хаклӑ.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Ҫӗнӗлле ӗҫлетпӗр

Урса кайнӑ, юн ӗҫекен фашистла варварсем пирӗн тӑван ҫӗршыв ҫине ултавлӑн килсе тапӑнчӗҫ. Вӗсем пирӗн фабрикӑсемпе заводсене, тӑван ҫӗршывӑн пуянлӑхне, пирӗн телейлӗ пурнӑҫа туртса илесшӗн, пире — рабочисемпе колхозниксене — ӗҫ выльӑхӗ туса хурасшӑн. Пулаймӗ вӑл! Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар тата Тинӗс-Ҫар Флочӗ тӑшмана хӑюллӑн та паттӑррӑн ҫӗмӗрет. Эпир шанса тӑратпӑр: тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкатпӑр, мӗншӗн тесен пӗтӗм совет халӑхӗ отечественнӑй аслӑ вӑрҫа ҫӗкленчӗ, вӑл Хӗрлӗ Ҫара пур майсемпе те пулӑшса пырать.

Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса каланӑ сӑмаха пӗтӗм совет халӑхӗ пысӑк тимлӗхпе итлерӗ. Канаш чугунҫул узелӗнчи парторганизаци Сталин юлташӑн историллӗ сӑмахне рабочисем хушшинче ӑнлантарса пама агитаторсене мобилизацилерӗ. Канаш чугунҫул узелӗнчи рабочисемпе служащисем производствӑра халиччен пулман пысӑк тухӑҫлӑх кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем тылра кӑтартуллӑн ӗҫлесе хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ.

Машинистсем Чупаев, Сачитов, Тюрюкалов юлташсем: — эпир фашистла ҫӗлен-калтасене ҫӗмӗрсе тӑкиччен паровозсем ҫинчен анмастпӑр, — теҫҫӗ. Вӗсем вӑхӑта пӑхмасӑр, канмасӑр ӗҫлеҫҫӗ.

Комплекслӑ бригада депоран тухмасӑр 20 сехет хушши ӗҫлесе виҫӗ паровоз юсаса кӑларнӑ. Ҫак ӗҫре Чеботарев, Золотухин, Коночкин, Игнатьев, Сперанский, Петров юлташсем пысӑк пултарулӑхпа ӗҫленӗ.

Станцинче тата таварсен картишӗнче дисциплина ҫирӗпленчӗ. Уйрӑм грузчиксем икшер-виҫшер норма тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Грузчиксен Аблясов бригади нормӑна 297 процент, Максимов бригади 187 процент тултараҫҫӗ. Савкин юлташ нормӑна 313 процент, Соловьев 248 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Вагонсен службин командирӗ Белоусов, вагонсем юсакан бригадӑн бригадирӗ Журкин коммунистсем ҫӗнӗлле, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек, ӗҫлеҫҫӗ. Автоматчиксем Георгиев, Семенов, Воронцов юлташсем нормӑна 247-шер процент таран тултараҫҫӗ.

Июлӗн 13-мӗшӗнче тата 20-мӗшӗнче узелта субботник ирттернӗ. Субботнике пурӗ 439 ҫын хутшӑннӑ. Коллектив 14 тонна тимӗр-тӑмӑр, 100 килограмм цветной металл пухнӑ. Станцине тасатса йӗркене кӗртнӗ.

Агитаци ӗҫӗ начар мар пулса пырать. Сергеевпа Кудрявцев агитаторсем рабочисемпе служащисем хушшинче политикӑллӑ агитаци ӗҫне аван туса пыраҫҫӗ.

А. РЖАВИН.

Канаш узелӗнчи партком секретарӗ.

Сӑмах пурнӑҫа кӗрет

ЭЛӖК. Синерти Жданов ячӗпе тӑракан колхозра Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса каланӑ ятпа пулнӑ митингра колхозниксем государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарма сӑмах пачӗҫ. Колхозниксем хӑйсен сӑмахне ӗҫпе ҫирӗплетеҫҫӗ. Колхоз государствӑна 1941 ҫулшӑн ыраш 56 центнер панӑ, сӗт-ҫу, аш-какай парса татнӑ.

А. ЧЕРЕНКОВ.

Аслӑ поэт-патриот

(М. Ю. Лермонтова вӗлернӗренпе ҫӗр ҫул тулнӑ тӗле)

МИХАИЛ ЮРЬЕВИЧ ЛЕРМОНТОВ.
Художник И. М. Тоидзе тунӑ портрет. (ТАСС фотохроники).

«Эпӗ тӑван ҫӗршыва нумайӗшӗсенчен ытларах юрататӑп» — тесе мӑнкӑмӑллӑн ҫырнӑ вунҫичӗ ҫулхи Лермонтов хӑйӗн малтанхи сӑввисенчен пӗринче (1831 ҫ.).

Лермонтов хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫӗ тӑршшӗпех патриотӑн пысӑк туйӑмӗпе пурӑннӑ. Вӑл халӑха, унӑн историне, унӑн творчествине, хамӑр ҫӗршыври ҫутҫанталӑка юратнӑ. Ача чухнех ӑна тӑван ҫӗршыври илемлӗх киленттернӗ. Вӑл ҫӗршывра ҫаксене юратнӑ:

— Ее степей холодное молчанье,
Ее лесов безбрежных колыханье,
Разливы рек ее, подобные морям...

Лермонтов халӑхӑн юррисене пит те тинкерсе итленӗ, халӑх творчествине тӗплӗн пӗлнӗ, унпа усӑ курнӑ. Вӑл халӑхӑн пурнӑҫӗпе унӑн нушисене пӗлнӗ, ахаль ҫынсене юратнӑ; офицер пулсан та, вӑл салтаксемпе пӗр пурнӑҫпа пурӑннӑ, вӗсемпе пӗр хуранран ҫинӗ, ҫара ҫӗр ҫинче ҫывӑрнӑ.

Этеме ирӗклӗхе кӑларас темӑран хаклӑ та ҫывӑх тема поэтшӑн урӑх пулман та. «Господасен ҫӗршывӗ» тесе Лермонтов крепостниксен Российӗнчи улпут-хуҫасене каланӑ, вӗсене вӑл чӗререн курайман. Унӑн «хурлӑхпа тата хаярлӑхпа витӗннӗ» сӑввисем «ирӗклӗх палачӗсене» питӗ хытӑ пырса тивнӗ. Николай патша, ун таврашӗнчи харампырсем, чурасен ӗҫӗпе пурӑнакан дворянсем, чиновниксен Российӗ поэта хӑйӗн чи хаяр тӑшманӗ тесе шутланӑ.

Мӗнпур талантлӑ та тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫынсене хӗсӗрлесе тӗп тӑвакансем хушшинче нимӗҫ графӗсемпе баронӗсен ушкӑнӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Вӗсем хӑйсем Российӑна юратманнине пытарман, анчах патша династийӗшӗн тӑрӑшсах ӗҫленӗ. Ҫавӑн пек ҫынсем ҫинчен — жандармсен шефӗ Бенкендорф, унӑн сылтӑм алли пулнӑ Дуббельт, министр Нессельрод тата ыттисем ҫинчен — Лермонтов, тарӑхса, ҫакӑн пек ҫырнӑ:

...Вот народ:

И без таланта правит и за деньги служит,
Всех давит...

Поэт ҫак «мундирлӑ подлецсене» хирӗҫ ирӗклӗхшӗн паттӑррӑн кӗрешекенсене, «тӑван ҫӗршывӑн хӑюллӑ ывӑлӗсене» кӑларса тӑратать. Ку геройсем «мӑнкӑмӑллӑ ҫӗршыв ют власть умӗнче пуҫ таясси» ҫинчен шухӑшлама та пултараймаҫҫӗ. «Ют власть айӗнче» пурӑнса намӑс куриччен тӑшманпа ҫапӑҫса вилессине маларах хураҫҫӗ.

Поэт вырӑс хӗрарӑм-патриоткин калама ҫук паха образне тунӑ. «Ҫамрӑк славянкӑн» упӑшки ҫапӑҫуран суранланса, юн юхтарса таврӑнать те, «пирӗн савнӑ ҫӗршыва чура турӗҫ... орда ҫӗнтерчӗ» тесе калама ӗлкӗрет ҫеҫ, хӑй вара ҫавӑнтах ӳкет те, «боецӑн юнлӑ вилӗмӗпе» вилет. Вара —

Жена ребенка поднимает
Над бледной головой отца:
«Смотри, как умирают люди,
И мстить учись...» (Баллада, 1830).

Ҫавнашкалах тата ача сӑпки умӗнче ывӑлӗ паттӑр воин, «ҫиелтен пӑхсан богатырь», пӗтӗм пурнӑҫне ҫапӑҫусене, тӑван ҫӗршыва, ирӗклӗхе панӑ ҫын пуласси ҫинчен ӗмӗтленекен амӑшӗн образӗ питӗ лайӑх.

Лермонтовшӑн хӑйӗншӗн тӑван ҫӗршывпа ирӗклӗх ӑнланӑвӗсем пӗр-пӗринпе уйӑрӑлми ҫирӗп ҫыхӑнса тӑнӑ. Халӑхӑн ирӗклӗхӗ ҫапӑҫусенче, ӗҫре, подвигсенче тупӑннине поэт пӗлнӗ.

Лермонтов тирансемпе кӗрешни ҫинчен («Вадим» повесть), халӑхсем никама пӑхӑнмасӑр пурнассишӗн паттӑррӑн кӗрешни ҫинчен («Измаил-бей» т. ыт. те) пысӑк юратупа ҫырнӑ. Кама хӗсӗрленӗ, кам чуралӑхра асапланнӑ — вырӑссен аслӑ поэчӗ ҫавсен тусӗ пулнӑ («Испанцы» драма, «Боярин Орша» поэма).

Лермонтов творчествинче 1812 ҫулти отечественнӑй вӑрҫӑ пирки ҫырнӑ произведенисем уйрӑмӑнах питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Лермонтовӑн патриотизмӗ ҫак вӑрҫӑ пӗтӗм халӑхӑн вӑрҫи пулнине чӗррӗн туйса тӑнӑ ҫӗрти пек ҫавтери вӑйлӑн ниҫта та палӑрмасть. Хӑйӗн пурнӑҫӗ татӑличченех поэт Наполеон ҫарне хирӗҫ пулнӑ историллӗ ҫапӑҫусен геройӗсене («Поле Бородина», «Бородино»), Мускава вут тӗртсе ҫунтарма шут тытнӑ халӑхӑн вӑй-хӑватне («Странный человек» ятлӑ драма) пысӑк хаваслӑхпа кӑтартса панӑ.

«Мускав панорами» ҫинчен ҫырса, Лермонтов Поклонная сӑртне аса илнӗ; «унтан Наполеон хӑйне пӗтермелли Кремль ҫине пӗрремӗш хут пӑхса илнӗ, унтан вӑл пӗрремӗш хут унӑн хурлӑха систерекен ҫулӑмне — хӑйӗн савӑнӑҫне тата пӗтнине ҫутатнӑ хаяр ҫутта курнӑ!»

Мускав Кремльне поэт вырӑс халӑхӗн вӑй-хӑватне, йывӑр хурлӑхсем хыҫҫӑн пӗтӗм халӑх савӑннине, ҫӗршыв пурнӑҫӗнчи калама ҫук пысӑк историллӗ событисене палӑртса тӑракан символ вырӑнне шутланӑ.

Вилес умӗн нумаях та мар, малтан, Лермонтов ҫапла ҫырнӑ:

Москва, Москва!.. Люблю тебя как сын,
Как русский, — сильно, пламенно и нежно!
Люблю священный блеск твоих седин
И этот Кремль зубчатый, безмятежный.
Напрасно думал чуждый властелин
С тобой, столетним русским великаном,
Помериться главою — и обманом
Тебя низвергнуть. Тщетно поражал
Тебя пришлец: ты вздрогнул — он упал!

Ҫамрӑк поэт 1837 ҫул пуҫламӗшӗнче «Современник» журнал валли Пушкина леҫсе пама шут тытнӑ пӗррремӗш сӑвӑ вӑл — «Бородино», ҫав хӑватлӑ ҫапӑҫура пулнисен калавӗсене художествӑллӑн ҫырса илни пулнӑ.

Ку сӑвӑра поэт ватӑ ветеран, рядовой салтак-артиллерист, пӗтӗм чӗрипе, пӗтӗм юнӗпе тӑван ҫӗршывпа ҫыхӑнса тӑракан ҫын ячӗпе каласа парать. Тӑван ҫӗршывшӑн вӑл хӑйӗн пурнӑҫне пама хатӗр:

Уж постоим мы головою
За родину свою!

Халӑхӑн вӑй-хӑватне нихӑҫан та ҫӗнтерес ҫуккине ҫирӗппӗн шанса тӑрса, ватӑ салтак Бородино хирӗнче пулнӑ ҫапӑҫӑва аса илет:

Изведал враг в тот день немало,
Что значит русский бой удалый,
Наш рукопашный бой!..

Бородино хирӗнчи ҫапӑҫура пулнӑ рядовой салтакпа пӗрле халӑх вӑйне «Бородино» авторӗ хӑй те хӗрӳллӗн ӗненнӗ.

Лермонтовӑн ҫулӑм пек поэзийӗ, унӑн хӗрӳллӗ патриотизмӗ пирӗн вӑхӑтра та пурӑнаҫҫӗ. Аслӑ поэта, 1812 ҫулти ҫӗнтерӳллӗ отечественнӑй вӑрҫӑн юрӑҫине, Совет ҫӗршывӗнчи халӑхсем лайӑх пӗлеҫҫӗ, ӑна юратаҫҫӗ. Лермонтов — хамӑр тӑван ҫӗршывӑн хӗрӳллӗ патриочӗ — юнлӑ фашизма хирӗҫ хӑватлӑ отечественнӑй вӑрҫӑпа вӑрҫакан ҫулӑмлӑ совет патриочӗсемшӗн питӗ ҫывӑх.

Проф. **Н. БРОДСКИЙ.**

Йӑлтах фронт валли

ОКТЯБРЬСКОЕ. Тӗрлӗ япаласем туса кӑларакан «Большевик» артельре ӗҫлекен хӗрарӑмсем ҫулталӑк планне октябрӗн 1-мӗшне тултарма, продукцин хӑйне ларакан хакне 14 процент йӳнетме обязательство илчӗҫ.

Ҫак обязательствӑна пурнӑҫа кӗртес пирки нимӗн иккӗленмелли те ҫук. Юлашки кунсенче артель уйрӑмах ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме тытӑнчӗ. Е. Макашина, Л. Комиссарова, Н. Комиссарова, Ф. Васильева т. ыт. те нормӑна 160—210 процент пурнӑҫлаҫҫӗ. 6 уйӑхри плана 165 процент тултарса, продукцин хӑйне ларакан хакне 10,5 процент йӳнетнӗ.

Артельти хӗрарӑмсем ҫар ӗҫне те тимлесех вӗренеҫҫӗ. Ҫак кунсенче хӗрарӑмсенчен 11 ҫын ПВХО нормине, 15 ҫын ГСО нормине пачӗҫ.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

Утӑ ҫулнӑ ҫӗрте

ВӐРНАР. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз утӑ ҫулас ӗҫе вӑхӑтра вӗҫлерӗ. Халӗ ҫулса типӗтнӗ утӑна капана хываҫҫӗ. Мария Гаврилова, Надежда Ракова, Мария Федорова, Лидия Арсентьева юлташсем утӑ ҫулнӑ ҫӗрте уйрӑмах тухӑҫлӑн ӗҫлерӗҫ. Вӗсем кулленхи нормӑна 150 процентран кая мар тултарса пычӗҫ.

Халӗ колхоз уборкӑна хатӗрленес ӗҫе вӑйлатрӗ. Жнейкӑсем, молотилкӑсем, урапасем юсавлӑ.

Колхозри строительство бригади чӑх-чӗп ферми валли вите тума тытӑнчӗ.

Н. АНИСИМОВ.

ЕТӖРНЕ. Районри нумай колхозсем утӑ ҫулас ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Утӑ ҫулнӑ вӑхӑтрах, чи малтан ҫулса типӗтнӗ паха утӑна государствӑна пачӗҫ. Талуйӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна икӗ тоннӑна яхӑн утӑ панӑ. Ҫавӑн пекех «Канаш» колхоз та утӑ чылай панӑ.

И. ЛЬВОВ.

ЙӖПРЕҪ. Шуркассинчи «Строитель» колхоз колхозникӗсем ватти-вӗттипех пурте утӑ тунӑ ҫӗрте ударлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Колхозра ӗҫе тухманни пӗр ҫын та ҫук. Уйрӑмӑнах Иван Данилов, Яков Лермонтов, Пелагея Лермонтова, Иван Патюков, Александра Патюкова, Татьяна Емельянова, Николай Прохоров, Семен Сорокин, Елена Сорокина, Прасковья Романова т. ыт. колхозниксемпе колхозницӑсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫ нормисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Колхозниксем пурте ӗҫе ирех тухаҫҫӗ те, тӗттӗм пуличченех ӗҫлеҫҫӗ. Утӑ ҫулас ӗҫе колхоз хӑвӑрт вӗҫлет.

А. ЕГОРОВ.

Уборка умӗнхи хӗрӳ ӗҫсем

Хальтерех кӑна ҫеҫкене ларма тытӑннӑ помидор йӑранӗ хушшипе пирӗн умма пӗр хӗрарӑм пырса тухрӗ. Пуринпе те алӑ тытса паллашрӗ те, колхоз председателӗпе Дмитриев юлташпа калаҫма тытӑнчӗ. — Василий Дмитриевич, — терӗ вӑл, — эпир комбайнпа 120 гектар пухса пама йышӑннӑччӗ вӗт-ха. Халӗ ҫав участока пӑхса тухса йышӑнма килтӗмӗр. Хӑвӑрах пӗлетӗр, комбайнпа ӗҫлеме тӳрем вырӑн лайӑхрах. Комбайнера та хампа пӗрле илсе килтӗм.

— Пирӗн ыраш уйӗ, авӑ куратӑр пулӗ, икӗ вӑрман хушшипе тӑсӑлса выртать. Комбайнпа ӗҫлеме питех те лайӑх унта. Айтӑр, вырӑнах илсе кайса кӑтартам, — терӗ председатель.

Ыраш уйӗ. Тинӗс пек хумханса выртать вӑл. Пӗрчӗсем тулса, хытса пыраҫҫӗ. Пӑхатӑн та, тулли кӑмӑлпа савӑнатӑн. Мӗн чухлӗ пурлӑх! Колхозниксем ӑнса ӳсекен тырпулсене тирпейлӗн, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗме хатӗрленеҫҫӗ. 3 жнейка тата пӗр лобогрейка юсаса лартнӑ. Уборкӑра кирлӗ ытти машинӑсем те, транспорт инвентарӗсем те хатӗрех лараҫҫӗ.

— Кӑҫал иртнӗ ҫулсенчи пек кӑна ӗҫлеме юрамасть. Кӑҫал вӑхӑчӗ ҫавӑн пек: ҫӗршыв Германи фашизмне хирӗҫ ҫӗнтерӳллӗ отечественнӑй вӑрҫӑ туса пырать, ҫак вӑрҫа ӑнӑҫлӑн вӗҫлес тӗлӗшпе пирӗн пӗтӗм вӑй-хӑвата хурса ӗҫлемелле, — теҫҫӗ колхозниксем.

Колхозниксен сӑмахӗ нихӑҫан та ӗҫрен уйӑрӑлса тӑмасть. Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ июлӗн 3-мӗшӗнче радио тӑрӑх тухса каласа, пӗтӗм ӗҫҫынисене тӑрӑшса ӗҫлеме, пӗтӗм ӗҫе вӑрҫӑ кунӗсене тивӗҫлӗ тата тӑшмана ҫӗнтерес интересене пӑхӑнтарма чӗнчӗ. Аслӑ ҫулпуҫӑн, Сталин юлташӑн сӑмахне ҫирӗппӗн асра тытаҫҫӗ колхозниксем. Вӗсем тылра тӑрӑшса ӗҫлесе тӑшман валли вилӗм хатӗрлеҫҫӗ.

Кашниех усӑллӑ ӗҫ тӑвать. Никама та ахаль лартмасть ӳссе тата ҫирӗпленсе пыракан колхоз. Акӑ, 3—4 колхозник пекарня тӑваҫҫӗ. Тырӑ вырма тухсан колхозра столовӑй ӗҫлеме тытӑнать. Пӗчӗк ачасем яслӗре пулаҫҫӗ. Колхозниксене тухӑҫлӑ ӗҫлеме пур условисем те ҫителӗклӗ пулаҫҫӗ.

Ҫуракине кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттернӗ. Тырпулсене ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. Анчах хальхи ӗҫе ниепле те малтанхи вӑхӑтрипе танлаштарма ҫук. Отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ кунсенче ватти те, ҫамрӑкки те — никам та ахаль ларасшӑн мар. Кашниех тухӑҫлӑ ӗҫлеме, тӑван ҫӗршыва ытларах усӑ кӳме тӑрӑшать.

Тӑватӑ гектар ҫинче помидор, хӑяр, купӑста тата ытти ҫимӗҫсем ӳсеҫҫӗ. Ҫак бригадӑра ӗҫлеме 10 ҫынна ҫирӗплетнӗ. Халӗ кунта кашни кунах 15—20 ҫынтан кая мар тухаҫҫӗ. Ир пуҫласа каҫчченех тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ вӗсем. Кашнин пӗр ӗмӗт: Хӗрлӗ Ҫар валли ялхуҫалӑх ҫимӗҫӗсене кирлӗ чухлӗ туса парас. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан ӗҫ вӑйне нумай ҫӑмӑллатнӑ. Акӑ кӳлӗ. Ун ҫывӑхне чигир туса лартнӑ. Шыва ҫӳле улӑхтарса, вӑлак тӑрӑх пахча-ҫимӗҫсем ӳсекен вырӑна юхтарса пыраҫҫӗ.

Икӗ ватӑ колхозник пӗрене татӑккисем якатса тӑраҫҫӗ. — Мӗн тӑватӑр, юлташсем, — ыйтрӑмӑр эпир. Кунта хуралҫӑна тӑмалли будка пулать.. Пахча-ҫимӗҫсене тата кӗлетри тырпулсене сыхласа тӑракан валли кирлӗ вӑл, — ӑнлантарчӗ вӗсенчен пӗри. Колхозӑн тата колхозниксен пурлӑхне сыхлас ӗҫе вӑйлатнине часах туйса илетӗн.

Вунӑ гектар ҫине ҫӗрулми лартса хӑварнӑ. Виҫӗ бригадӑри колхозниксем ҫӗрулми ҫинчи ҫумкурӑксене ҫумлаҫҫӗ, ҫӗрулми ҫеҫки ҫывӑхӗнчи тӑпрана кӑпӑшкалатса тӑраҫҫӗ.

Пур ҫӗрте те пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Кашнин валлиех ӗҫ ҫитет. Ҫак кунсенче 20 ҫын вӑрман каснӑ ҫӗрте ӗҫленӗ. Вӗсем вӑрман касас тӗлӗшпе панӑ государство планне срокра тултарнӑ.

Тырпулсене пухса кӗме тытӑнас умӗнхи кунсенче ҫакӑн пек ӗҫлеҫҫӗ Молотов ячӗпе тӑракан колхозра. Тырпулсене пухса кӗме план тунӑ. Ӑнӑҫлӑ ӳсекен тырпулсене кӗске вӑхӑтра, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗме палӑртнӑ. Ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тухнӑ. Уборка пуҫланиччен ытти мӗнпур ӗҫсене пурнӑҫа кӗртсе ҫитереҫҫӗ.

КАНАШ. (Хамӑр корр.)

КӖСКЕН

«Заря» колхозра (Йӗпреҫ р.) санитари ӗҫне вӗренме кружок организациленӗ. Вӑл кружокра 22 хӗрача вӗренет. Кружока траxработница Ермошкина юлташ ертсе пырать.

Ф. КИРИЛЛОВ.

Уборкӑна тивӗҫлипе хатӗрленессишӗн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чӑнкассинчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз хӗрсех уборкӑна хатӗрленет. Колхозра виҫӗ жнейка, вӗсем пурте юсавлӑ. Ҫак кунсенчех тепӗр лобогрейкӑна ӗҫе юрӑхлӑ туса ҫитереҫҫӗ. Колхоз тырпула пухса кӗме 408 михӗ хатӗрленӗ.

Уборка ирттермелли ӗҫ планне туса ҫитернӗ. План тӑрӑх кашни жнейка патӗнче 7 ҫын ӗҫлемелле. Уборка вӑхӑтӗнче ачасен ясли тата столовӑй ӗҫлемелле.

Тырпула пухса кӗме «Волга», «Комсомолец», «Ленин ҫулӗпе» колхозсем те начар мар хатӗрленеҫҫӗ. Анчах хӑшпӗр колхозсем ку ӗҫпе юлса пыраҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Аялти Улмалуйӗнчи «Красный танк» колхоза илер. Кунта ялхуҫалӑх машинисенчен 2 жнейка, пӗр молотилка, тепӗр сортировка, 2 сеялка халӗ те юсавлӑ мар. Тырӑ хумалли амбарсемпе складсене дезинфекци туман.

Ф. ДАНИЛОВ,
П. КОЗЛОВСКИЙ.

Пурҫӑн хурчӗсене ӗрчетесси сарӑлсах пырать

Пирӗн республикӑри колхозсенче юман ҫулҫи ҫинче пурҫӑн хурчӗ ӗрчетесси сарӑлсах пырать. Иртнӗ ҫулта ҫак ӗҫпе республикӑри 10 колхозра ӗҫленӗ пулсан, кӑҫал 9 район тӑрӑх 55 колхозра ӗҫлеҫҫӗ. Пурҫӑн хурчӗсене ӳстерсе кӑларасси пур ҫӗрте те ӑнӑҫлӑ иртрӗ. Октябрьски районри «Путь Ленина», Ҫӗрпӳ районӗнчи «Поженар» колхозсем пурҫӑн хурчӗсене вӑрманта, юман тӗмисем ҫинче тӑрантарса усрама хатӗрленеҫҫӗ.

Октябрьски районри Калинин ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫалхипе иккӗмӗш ҫул Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ. Выставкӑра тӗштырӑ, хӑмла, пахча-ҫимӗҫ тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсемпе пӗрлех, пурҫӑн хурчӗсене ӗрчетес тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсене кӑтартса пачӗ. Иртнӗ ҫулта ҫак колхоз государствӑна 167 килограмм е 4 пин тенкӗлӗх кокон пухса сутнӑ.

Кӑҫал кунта татах та пысӑк ӳсӗм тума ӗмӗтленеҫҫӗ. Пурҫӑн хурчӗсене ӳстерсе кӑларнӑ. Халӗ вӗсене юман ҫулҫи ҫине ярса тӑрантарма тытӑннӑ. Кӑҫал ҫуркунне 2 гектар ытла ҫӗр ҫинче юман турачӗсене касса тасатнӑ. Ҫамрӑк та таса ҫулҫӑсем ӳсеҫҫӗ.

Пурҫӑн хурчӗсене ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадӑна А. Шавелев юлташ ертсе пырать. Вӑл ҫак ӗҫе иртнӗ ҫулта Уфа хулине кайса курсра вӗренсе килнӗ. Бригадӑра 12 ҫын. Виҫӗ звено. Лайӑх ӗҫленӗшӗн Шавелев юлташа Куйбышеври пурҫӑн (дубовое шелкопрядство) хурчӗсем ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен госплемпунктӑн хисеп пӑми ҫине кӗртнӗ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхоз пурҫӑн хурчӗсем ӗрчетес тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳ тума пулса, Куславкка районӗнчи «Динамо», Ҫӗрпӳ районӗнчи «Поженар» колхозсемпе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ. Кашни пӗр килограмм гренӑран 200 килограмран кая мар кокон пухса илме пулнӑ. Обязательствӑна пурнӑҫа кӗртес пирки нимӗн иккӗленмелли те ҫук. Колхоз ҫак отраҫлӗрен те пысӑк тупӑш илӗ.

Колхозсен тата колхозниксен пурҫӑн хурчӗсем ӗрчетес ӗҫе вӑйлатма пур условисем те ҫителӗклӗ. Партипе правительство ку тӗлӗшпе пулӑшса пыраҫҫӗ. Пурҫӑн хурчӗсем ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозсене нумай сроклӑха 200 пин тенкӗ кивҫен укҫа панӑ. Хуртсене юман ҫулҫипе тӑрантарса усрама вӑрмансем уйӑрса панӑ.

Пурҫӑн хурчӗсем ӗрчетес тӗлӗшпе уйрӑмӑнах юннатсем тата шкулта вӗренекенсем хытӑ интересленеҫҫӗ. Вӗсене кӑҫал опытлӑ ӗҫсем тума 500 грамм грена уйӑрса панӑ. Ҫамрӑк техниксемпе натуралистсен республикӑри станцийӗ пурҫӑн хурчӗсем ӗрчетес ыйтупа юннатсем валли уйрӑм листовка пичетлесе кӑларать.

Пурҫӑн хурчӗсене лайӑх ӗрчетес тата пысӑк тухӑҫлӑ коконсем пухса илессишӗн пирӗн республикӑри колхозсем Куйбышев облаҫӗнчи колхозсемпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

Пурҫӑн хамӑрӑн хуҫалӑх ӗҫӗнче кӑна мар, оборона ӗҫӗнче те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пирӗн колхозсем ҫакна асра тытса ӗҫлеҫҫӗ.

Н. КОНДАКОВ.

Чкалов ячӗпе тӑракан артельте

ЕТӖРНЕ. Пушнар ялӗн тип-тикӗс те илемлӗ урамӗпе утса пынӑ чух, аякранах икӗ чулҫурт ларни курӑнать. Ӗлӗк ку пӳртсем Абрамовпа Столяров кулаксен пулнӑ. Халӗ унта, пӗринче — Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз правленин канцелярийӗ, тепринче — Чкалов ячӗпе тӑракан промартель вырнаҫнӑ. Ҫак промартель вырнаҫнӑ ҫурт еннелле пынӑ ҫемӗн хӑлхана юрӑ сасси хытӑран та хытӑ янтраса пырса кӗрет. Кусем — тӗрӗ тӗрлекенсем, юрла-юрла тӗрӗ тӗрлеҫҫӗ.

Артель членӗсем хушшинче производство планне тултарассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Кунта хӗрарӑмсем ытларах ӗҫлеҫҫӗ — вӗсем 29 ҫын. Пир тӗртекен А. Кузьмина кулленхи ӗҫ нормисене яланах тултарса пырать. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цех май уйӑхӗнчи производствӑллӑ плана 130 процент тултарнӑ. Ҫӗвӗ ҫӗлекенсем Н. Токарев, Е. Егорова юлташсем плана ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Вӗсен продукцийӗ пахалӑх енчен лайӑх. Тӗрӗ тӗрлекенсенчен Моисеева, Смирнов Лазарева, Фомичева юлташсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Учительсен пуҫарулӑхӗ

Пирӗн Совет учителӗсем пур ӗҫре те хӑйсен пултарулӑхӗсене кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Шуркассинчи вӑтам шкулти учительсем (Сӗнтӗрвӑрри р.) хӑйсен вӑйӗпе шкул ҫуртне юсама тытӑннӑ. Ку ӗҫре шкул ачисем те активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ Вӗсем шкул валли вутӑ хатӗрлеҫҫӗ, шкул ҫуртне юсанӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах колхозниксем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе те пӗр вӑйсӑрлатмасӑр туса пыраҫҫӗ. Учительсем кашни кунах колхозниксемпе калаҫусем туса ирттереҫҫӗ, хаҫатсем вуласа параҫҫӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

(1941 ҫулти июлӗн 26-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ)

Ыран июлӗн 26-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Полоцк-Невель, Смоленск тата Житомир енӗсенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса пынӑ.

Противникӑн пысӑк ҫухатусем пулаҫҫӗ, ҫакна ӗнтӗ противникӑн соединенийӗсемпе чаҫӗсен командисен донесенийӗсем, пирӗн войскӑсен аллине лекнӗскерсем, кӑтартса параҫҫӗ.

Пирӗн авиаци, ҫӗр ҫинчи войскӑсемпе пӗрле, ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн мотомехчаҫӗсене тата пехотине хирӗҫ кӗрешнӗ. Тӗплӗн палӑртнӑ тӑрӑх, июлӗн 24-мӗшӗнче нимӗҫсен 47 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Противник танкӗсен колонни З. ятлӑ пысӑк ял патнелле пынӑ. Танксен умӗнче тӑшманӑн разведчикӗсем — мотоциклистсем пынӑ. Ял патне ҫитсен танксем чарӑнса тӑнӑ, разведчиксем сведени илсе килессе кӗтнӗ. Анчах мотоциклистсем каялла таврӑнман. Вӗсем пирӗн саперсем алтса хатӗрленӗ пысӑк шӑтӑка кӗрсе ӳкнӗ те, И. Останчук лейтенантӑн подразделенинчи боецсем вӗсене ярса тытнӑ. Разведчиксем нумай вӑхӑт хушши таврӑнманнине пула шикленсе, противник ял ҫине тӗллесе темиҫе хутчен пӑшалтан пенӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн подполковник В. Свиридов ертсе пыракан артиллери чаҫӗн батарейисем икӗ енчен те пеме пуҫланӑ. Фашистсен танкӗсем пӑтрашса кайнӑ, совет артиллерисчӗсем лайӑх персе тӑракан участокра вӗсем ҫаврӑнкаласа ҫӳреме тытӑннӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн 18 йывӑр танкӗсем, 11 ҫӑмӑл танкӗсем, 12 грузовик тата 7 противотанковӑй тупӑсем выртса юлнӑ.

* * *

Подполковник Малаховӑн десантнӑй группи, артиллери тата авиаци пулӑшнипе, виҫӗ утрава йышӑнса хӑй сумне ҫирӗплетсе хӑварнӑ. Пирӗн боецсем хӑюллӑн та татӑклӑн кӗрешнинчен хӑраса ӳксе, белофинсем ним йӗркесӗр тарнӑ, 12 пулемет, 185 винтовка, 5 миномет тата 3 тупӑ пӑрахса хӑварнӑ. Белофинсен нумай салтакӗсене тыткӑна илнӗ.

* * *

М. хулинчен каялла чакнӑ чухне противник вӑл хула патне пымалли мӗнпур ҫулсем ҫине минӑсем хурса хӑварнӑ. Хула территорине минӑсенчен тасатма лейтенант Пальцев ертсе пыракан саперсен группине янӑ пулнӑ. Хӑюллӑ боецсем 80 ытла минӑна сиенсӗрлетнӗ, пирӗн чаҫсем валли хӑрушлӑхсӑр ҫул туса хунӑ. Саперсем ҫине нимӗҫсен самолечӗсем темиҫе хутчен те пенӗ, анчах вӗсем пени ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Фашистсен летчикӗсен атакисене сире-сире ярса, пулеметчик Апраксин пӗр «Мессершмитта» персе антарнӑ тата иккӗмӗшне ҫунтарса янӑ.

* * *

Старший лейтенант Ефименков ротинчи связистсем ҫапӑҫура питех те лайӑх кӗрешеҫҫӗ. Д. хули патӗнче ҫапӑҫнӑ чухне, противникӑн авиацийӗпе артиллерийӗ вӑйлӑн персе тӑнӑ пулин те, пирӗн ҫыхӑну питех те лайӑх ӗҫленӗ. Ванников, Семенов тата Тиунов красноармеецсем ҫыхӑнури кӑлтӑксене ҫийӗнчех пӗтерсе пынӑ. Ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче снаряд ӳксе ҫурӑлнипе Ванниковпа Семенов юлташсене ҫӗр хупласа хунӑ. Тӑшман пулеметран персе тӑнӑ пулин те, Тиунов хӑйӗн юлташӗсене ҫӗр айӗнчен алтса кӑларнӑ та кирлӗ пулӑшӑва панӑ. Ефименков юлташ ротинчи боецсем противник разведчикӗсен темиҫе группине тытса чарнӑ. Юлашки эрнере кӑна вӗсем нимӗҫсен 25 ҫынран тата 36 ҫынран тӑракан икӗ десантне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Тӑшманӑн С. районӗнчи тылне инҫете кӗрсе кайнӑ пирӗн разведчиксем—Рюмин, Поливанов тата Зубарев красноармеецсем ҫакӑн пек сцена курнӑ: нимӗҫсен пропаганда ротинчи кинооператорсем хроника ӳкерсе илнӗ, унта Германи ҫарӗн «ҫӗнтерӳне» кӑтартасшӑн пулнӑ. Киноаппарат умӗнче офицер темиҫе хресчен старикӗсен аллине чӑмӑртаса тӑнӑ, вӑл хресченсене кунта халӗ кӑна нимӗҫ салтакӗсен приклачӗсемпе хӗнесе илсе килнӗ пулнӑ. Ҫак сцена Германи оккупанчӗсене халӑх «саламласа кӗтсе илнине» кӑтартмалла пулнӑ пулмалла.

Ҫак сценӑна ӳкерсе илнӗ хыҫҫӑн хресченсене вӑрман патнелле тарма приказ панӑ. Халӗ кӑна хресченсен аллине тытса чӑмӑртанӑ офицер пулемет патне чупса пынӑ та хӳтлӗхсӗр хресченсене персе вӗлернӗ.

* * *

Польша партизанӗсем активлӑн кӗрешни Германи военщинине вӑйлӑнах шиклентерет. Ҫак кунсенче Дембицӑран 15 километрта партизансем кавалери чаҫӗ ларса пыракан поезда тӳнтерсе янӑ. Партизансем Германи салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ, 180 лаша, боеприпассемпе продовольстви ярса илнӗ. Ҫар валли тиенӗ пурлӑхӑн пӗр пайне ҫунтарса янӑ. Нимӗҫсен Польшӑра тухса тӑракан хаҫачӗсенче кашни кун тенӗ пекех охрана отрячӗсен группин руководителӗ «вӑхӑтсӑр вилни» ҫинчен, «тӑшман выступленине пула» охранник вилни тата ытти ҫинчен пӗлтерӳсем пичетленеҫҫӗ. Польшӑри фашистла хаҫат «Кракуэр цейтунг» ҫакӑн пек тревога ҫӗклет: «партизансен движенийӗ эпир шутланинчен чылай анлӑрах», тесе пӗлтерет вӑл. Поляксем партизанла кӗрешнӗ пирки тарӑхса кайнӑ нимӗҫ оккупанчӗсем мирлӗ халӑха питех те хаяррӑн хӗсӗрлеҫҫӗ. Ачасене ҫимӗҫсем памалли ахаль те пӗчӗк нормӑсене гитлеровецсем татах та пӗчӗклетнӗ. Варшавӑра тата ытти нумай хуласенче поляксен ҫӗршер ачисем пӗрмаях тӑраниччен ҫиеймен тата выҫӑ ларнӑ пирки вилеҫҫӗ. Польша халӑхне ҫӑкӑр памалли нормӑна икӗ хут чакарнӑ. Польша рабочийӗ халӗ эрнере 210 грамм хура ҫӑкӑр илет. Штурмовиксемпе нимӗҫсен вӑрттӑн полицийӗ кӑнтӑрла та, ҫӗрле те килсене ҫӗмӗрсе кӗреҫҫӗ те, нимӗҫсен хисепсӗр нумай лазаречӗсем валли юлашки кӗпене, простыне тата алшӑллине илсе тухса каяҫҫӗ. Кӑшт та пулин кӑмӑлсӑр пулнине кӑтартсанах пӑшалпа усӑ кураҫҫӗ. Юлашки эрне хушшинче пӗр Варшаваран кӑна 3 пине яхӑн ҫын ним хыпарсӑр ҫухалнӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫарӑн фронта кайнӑ боецӗсен ҫемьисемшӗн совет халӑхӗ ҫавтери тимлӗн тӑрӑшать. Вӑрҫӑ пуҫланас умӗн колхозник Бочков юлташ хӑйне валли ҫӗнӗ пӳрт лартма пуҫланӑ пулнӑ, анчах туса пӗтереймен, мӗншӗн тесен ӑна Хӗрлӗ Ҫара илсе кайнӑ. Тула облаҫӗнчи Лаптевски районӗнчи «Революционный труд» колхоз членӗсем ҫав пӳрте хӑйсен вӑйӗпе туса пӗтерме йышӑннӑ. Бочков юлташ ҫемьи кӗҫех ҫӗнӗ пӳрте куҫать. Орел облаҫӗнчи «Красный пахарь» тата «Комсомолец» артельсен колхозникӗсем Климинпа Азаров красноармеецсен ҫемьисен пӳрчӗсене юсаса панӑ. Вологда облаҫӗнчи Бабаево хулинчи рабочисемпе служащисем красноармеецсен ҫемьисем валли 450 кубла метр ытла вутшанкӑ хатӗрленӗ. Красноармеецсен Невежинпа Сулов юлташсен ҫемьисем Сталинградри трактор завочӗн пур енчен те лайӑх тирпейленӗ ҫурчӗсенче ҫӗнӗ пӳлӗмсем илнӗ. Свердловск хулинчи вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ тата аслӑрах классенче вӗренекен хӗрачасем, 150 ҫын, Хӗрлӗ Ҫара илсе кайнисен ачисем валли уҫнӑ ача сачӗсенче хальхи вӑхӑтра воспитательсен помощникӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Свердловскри чи лайӑх комитетсенчен пӗрин председателӗ Протесова юлташ тата унӑн участокӗнчи ытти хӗрарӑм-общественницӑсем красноармеецсем валли кӗпе-йӗм ҫӗлеҫҫӗ. Тамбов облаҫӗнчи Платоновски районӗнчи боецсен ачисем валли ача площадкисем ҫирӗм ытла организациленӗ.

Красноармеец Фесенко фашистсен тыткӑнӗнчен тарса тухни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлӗн 25-мӗш. Тӑшман пульли красноармеец Фесенкона йывӑр амантнӑ. Ӑнран кайнипе вӑл П. юханшывӗн ҫыранӗнче йӑванса кайнӑ.

Боец фашистсен тӑватӑ йӗкӗчӗ тӑшман ҫыранӗ патнелле илсе каякан лодка ҫинче кӑна ӑна кӗнӗ.

«Эпӗ—фашистсен тыткӑнӗнче!» Ҫак шухӑш ӑс-пуҫа чӗртсе янӑ.—«Тыткӑна лекиччен вилни лайӑхрах,—шутланӑ Фесенко, вӑл часах решени йышӑннӑ. Вӑл, шыв ӗҫес тесе лодка хӗррине хӑвӑрт та вӑйлӑн тайӑлтарса, ӑна тепӗр майлӑ ӳпӗнтерсе янӑ. Фашистсем шыва ӳкнӗ, Фесенко тарӑн чӑмса хӑйсен ҫыранӗ патне ишсе тухнӑ. Тӑшман ҫыранӗ енчен ун ҫине пеме пуҫланӑ. Шыв айне чӑмса, хӑйӗн ҫулне улӑштарса, вӑл юханшыв урлӑ ишсе каҫнӑ та йывӑҫ тӗмисем хушшипе пырса пирӗн чаҫсем вырнаҫнӑ ҫӗре лайӑххӑнах ҫитнӗ. (ТАСС).

Моссовет Председателӗ Пронин патне Лондонран янӑ телеграмма

Моссовет Председателӗ Пронин юлташ ячӗпе Лондонран ҫакӑн пек телеграмма илнӗ:

«Сирӗн хулана ним тӗллевсӗр сиен кунӑ пирки, Лондонри халӑх ячӗпе пӗтӗмӗшпех сирӗнпе пӗр шухӑшлӑ пулса Мускав халӑхне салам яратӑп. Ҫак этемле мар тапӑннин хӑрушлӑхне эпир сирӗнпе пӗрлех туйса тӑратпӑр. Эсир хирӗҫ тӑнишӗн саванса, сире саламлатпӑр.

Татӑклӑн ҫӗнтериччен эпир пӗрле тӑрӑпӑр.

Чарльз Аммон — Лондон
Графстви Совечӗн Председателӗ».

Чехипе Моравири госпитальсем аманнӑ нимӗҫсемпе тулса ларнӑ

ЛОНДОН. (ТАСС). «Таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Варшавӑсӑр пуҫне Прагӑри тата пӗтӗм Чехири кашни госпиталь Германин аманнӑ офицерӗсемпе тата салтакӗсемпе тулса ларнӑ. «Германин калама ҫук пысӑк ҫухатусем пулнине шута илсен,—тесе ҫырать хаҫат,—Чехипе Моравири пӗтӗм протектората ятарласах аманнӑ салтаксене вырнаҫтарма тунӑ темелле.

Ютҫӗршыв корреспонденчӗсен черетсӗр пресс-конференцийӗ

Ютҫӗршыв корреспонденчӗсен июлӗн 25-мӗшӗнче пулнӑ черетсӗр пресс-конференцийӗнче Совет Информаци Бюровӗн начальник заместителӗ С. А. Лозовский юлташ ҫакна пӗлтернӗ:

Июлӗн 15-мӗшӗнче Ситняран хӗвеланӑҫ енче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен 52-мӗш химически полкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ чухне, ытти документсемпе пӗрле, Турцин Европӑри пайне тата проливсене ӳкернӗ секретлӑ схемӑсемпе карттӑсен папкине туртса илнӗ. Вӑрҫӑ ӗҫӗсем пуҫланас умӗн 52-мӗш полк Хӗвелтухӑҫ Пруссире вырнаҫса тӑнӑ, унта ӑна Балканран илсе пынӑ пулнӑ.

Схемӑра тата карттӑсенче Турцин ҫар объекчӗсене: аэродромӗсене, арсеналӗсене, металлурги завочӗсене, портсен сооруженийӗсен т. ыт. те условнӑй паллӑсемпе ӳкерсе кӑтартнӑ. Документсем хушшинче тупнӑ «Военно-географические данные о европейской части Турции, включая проливы» ятлӑ брошюра уйрӑмӑнах интереслӑ. Вӑл брошюрӑра сӑртсемпе тӳрем вырӑнсем ҫинчен, Турци войскисем ӑҫта вырнаҫса тӑни ҫинчен, подвижной составсем ҫинчен питех те тӗплӗн кӑтартса панӑ, тинӗсрен десант антарса хӑвармалли майсем ҫинчен, оккупациллӗ ҫарсемпе штабсене мӗнле вырнаҫтармалли ҫинчен практикӑллӑ кӑтартусем панӑ. Моторизованнӑй ҫарсем пырса кӗмелли лайӑх вырӑнсене кӑтартса панӑ.

Лозовский юлташ ҫапла паллӑ тунӑ: ҫак секретлӑ документсем Германири фашистла правительсен вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчи оперативлӑ планӗсем пирки нимӗнле иккӗленӳ те хӑвармаҫҫӗ. Турци тӗлӗшпе ССР Союзӗн агрессивлӑ плансем пур тесе элекленисемпе тата пуҫран шухӑшласа кӑларнӑ суя хыпарсемпе шавласа, Германи фашисчӗсем Турци республикин территорийӗ, ирӗклӗхӗ тата никама пӑхӑнмасӑр пурӑнас положенийӗ ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑнма вӑрттӑн хатӗрленеҫҫӗ.

Ютҫӗршывсен корреспонденчӗсем пирӗн войскӑсем ярса илнӗ документсен подлинникӗсемпе паллашнӑ тата вӗсен фото-копине илнӗ.

Рейтер агентствин корреспонденчӗ г-н Ловелл: ҫав документсем ҫинчен Турци правительствине пӗлтерӗн-и, тесе ыйтни ҫине Лозовский юлташ ҫапла ответленӗ: ССР Союзӗпе Турци хушшинчи хальхи отношенисенче Турци правительствине ҫав документсем ҫинчен, ман шутпа, вӑхӑтра пӗлтереҫҫӗ, тенӗ.

Нимӗҫ фашисчӗсем Турци ҫине тапӑнма хатӗрленнине кӑтартса паракан Германин главнӑй командованийӗн секретлӑ докуменчӗсем, карттисем тата схемисем

Июлӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем Ситняран хӗвеланӑҫ енче нимӗҫсен 52-мӗш химически полкне аркатса тӑкнӑ чухне, ытти документсемпе пӗрле, Турцин Европӑри пайне тата проливсене ӳкернӗ секретлӑ карттисемпе схемисен папкине тытса илнӗ.

Нимӗҫсен каялла чакнӑ чухне тыткӑна илнӗ чылай салтакӗсемпе офицерӗсем каласа панӑ тӑрӑх, 52-мӗш полк вӑрҫӑ ӗҫӗсем пуҫланас умӗн Хӗвелтухӑҫ Пруссинче вырнаҫса тӑнӑ, кунта ӑна Балканран куҫарнӑ пулнӑ.

Папкӑра ҫаксене тупнӑ:

1. «Военно-географические данные о европейской части Турции, включая проливы» ятлӑ брошюра. Кун ҫумне Турци аэродромӗсен эскизӗсемпе схемисене, таврари вырӑнӑн рельефне, ҫыхӑнава т. ыт. хушса пичетлесе кӑларнӑ.
2. Турцин Европӑри пайӗн 1:500 пин масштаблӑ чи пахарах ҫул-йӗрсене кӑтартса паракан картти.
3. Истанбулӑн 1:15 пин масштаблӑ географиллӗ планӗ.
4. Босфорӑн 1:100 пин масштаблӑ картти, кунта Турцин ҫар объекчӗсене кӑтартса панӑ.
5. Излит заливӗн 1:100 пин масштаблӑ картти, кунта Турцин ҫар объекчӗсене кӑтартса панӑ.

Ҫак мӗнпур документсем ҫинче, «служебӑра кӑна усӑ курма юрать» тесе асӑрхаттарса пичетлесе кӑларнӑскерсем ҫинче, Турци ҫар объекчӗсене: аэродромсене, арсеналсене, верфьсене, вӑрҫӑ хатӗрӗсене тӑвакан заводсене, порт сооруженийӗсене, металлурги завочӗсене, чугунҫул деповӗсене, ҫарсенчи радиостанцисене, хими завочӗсене, боеприпассен завочӗсене тата ытти объектсене условнӑй паллӑсемпе кӑтартса панӑ, кӗперсем мӗнлине, вӗсене мӗнле материалран (металран, тимӗр-бетонран, йывӑҫран т. ыт.) тунисене кӑтартса панӑ.

Брошюрӑра таврари вырӑнӑн рельефӗ ҫинчен, Турци ҫарӗн йышӗ тата ӑна вырнаҫтарса тухни ҫинчен, подвижной состав ҫинчен калакан тӗплӗ сведенисене пичетленӗ, сӑнаса тӑмалла мелӗрех вырӑнсене суйласа илесси ҫинчен, оккупациллӗ ҫара вырнаҫтарса тухасси ҫинчен, тинӗс десантне антарса хӑварас майсем ҫинчен практикӑллӑ кӑтартусем панӑ. Доксен хисепӗпе пысӑккӑшне, портсенчи кран сен грузоподъемноҫне, брошюрӑра каланӑ тӑрӑх десант антарса хӑварма меллӗ ҫыран таврашӗнчи уйрӑм вырӑнсен тӑрӑнашне кӑтартса панӑ. Моторизованнӑй чаҫсем ытларах сиен кӳме пултармалли вырӑнсене кӑтартса панӑ. Сӑмахран, 9-мӗш страницӑра ҫапла каланӑ:

«Турцие оккупацилеме е ун урлӑ тухса кайма задача лартакан кашни ҫаршӑнах пролив урлӑ каҫасси питех те йывӑр проблема пулса тӑрать. Кирлӗ майсем ҫинчен Босфор (ҫавӑн пекех Истанбул), Мраморнӑй тинӗс тата Дарданелл ҫинчен ҫырнӑ ҫӗрте кӑтартса панӑ».

26 страницӑра оккупациллӗ ҫарсене вырнаҫтарасси ҫинчен кӑтартса панӑ.

«...Ҫапла вара, Европӑри войскӑсемпе штабсене Пера хулин районӗнче ҫеҫ кирлӗ пек вырнаҫтарма пулать. Унта ҫичче яхӑн пысӑк гостиницӑсем, вӗсенчен чи лайӑххисем Пера-Палас тата Токатлиян пулса тӑраҫҫӗ, ҫавнашкалах пӗчӗкрех нумай гостиницӑсем пур. Унта тата управлени валли юрӑхлӑ пысӑк ҫуртсем, сӑмахран, французсен шкулӗ тата нимӗҫсен шкулӗ пур. Таксима площачӗ патӗнчи сарлака урамсем ҫывӑхӗнче пысӑк казармӑсем, транспорт хатӗрӗсене вырнаҫтармалли площадкӑсем вырнаҫнӑ...»

15 страницӑра фашистла захватчиксем Турцине тинӗсрен десант антармалли майсене сӳтсе-яваҫҫӗ:

«...Вӑйлӑ ҫил-тӑвӑлсене тата ҫӳллӗ ҫырансене пула, Хура тинӗс ҫыранӗн ҫурҫӗр пайӗнче десант антарма питӗ йывӑр тата пулӑҫсен пӗчӗк киммисемпе усӑ курса ҫеҫ антарма пулать. Малалла кӑнтӑр еннелле кайсан ҫырансем сӗвек тата десантсем антарма май параҫҫӗ пулин те, войскӑсене сарса тӑратас ӗҫ кунта вӑйлӑ укреплениллӗ Чаталдж линийӗн вучӗ айне лекме пултарать...»

Ҫак мӗнпур документсем Гитлер правительстви тытакан тӗллевсем пирки нимӗнле иккӗленӳ те хӑвармаҫҫӗ. Унтан та ытларах, Германин главнӑй командованийӗ ҫак документсене уйрӑм полксене, урӑхла каласан ӗҫе тӑвакансене, ярса панӑ. Германи фашисчӗсем, Совет Союзӗн Турци тӗлӗшпе нихӑҫан пулман темле агрессивлӑ планӗсем ҫинчен ирсӗр элек саракан скерсем, хӑйсене хӑйсемех тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗҫ. Турци правительствине хӑйсем мирлӗ пурнӑҫа юратнӑ пек кӑтартса суя ӗнентерӳсем парса, туслӑх ҫинчен договор туса тата ҫапла майпа Турци халӑхне ҫывратса ярса, вӗсем ҫав вӑхӑтрах Турци ҫине тапӑнма вӑрттӑн хатӗрленеҫҫӗ.

Совет правительстви, Турци ҫине яланах туслӑн пӑхнӑскер, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем тытса илнӗ вӑрттӑн документсем ҫинчен, Турци ҫине тапӑнма хатӗрленекен гитлерсемпе папенсен чӑн-чӑн агрессивлӑ сӑн-сӑпатне уҫса кӑтартакан документсем ҫинчен, Турцин Мускаври посолӗ урлӑ Турци правительствине пӗлтерме кирлӗ тесе шутларӗ.

Болгари ҫарӗнчи Германие хирӗҫле шухӑшсем

СТАМБУЛ, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Нейтральнӑй ҫӗршывсен журналисчӗсем хушшинче ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Болгарирен пырса ҫитнӗ ҫынсем Болгари ҫарӗнче Германие хирӗҫле шухӑшсем ӳснине паллӑ тӑваҫҫӗ. Салтаксем Совет Союзӗ ҫине юратса пӑхни ҫинчен час-часах пӗлтереҫҫӗ тата фашистла Германие хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте ӑна активлӑн пулӑшма хатӗр.

Америкӑри пӗр корреспондент хӑй Болгари офицерӗпе калаҫни ҫинчен каласа парать. Офицер ҫапла каланӑ: унӑн Фракире тӑракан чаҫӗ питех те шанчӑксӑр. Салтаксем,—тесе паллӑ тунӑ вӑл,—нимӗҫсене кураймаҫҫӗ, вӗсем Хӗрлӗ Ҫара кӑмӑлласҫӗ тата вӑл ҫӗнтерессе шанса тӑраҫҫӗ.

Англин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ пӗлтерни

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ Лоу общинӑсен палатинче хӑйне панӑ ыйтусене ответлесе, ҫапла пӗлтернӗ: Англи правительстви ҫакӑнпа интересленнӗ: Франци Сомалийӗнчи ресурссем тата унӑн территорийӗ Англи противникӗсен аллине лекмелле ан пулччӑр, тесе мерӑсем йышӑннӑ. Лоу ҫапла каланӑ: Англи правительстви Франци Сомалийӗ тӗлӗшпе территорисем туртса илме шутламасть.

Германипе Итали оккупанчӗсем Грецине пусмӑрта тытса усрани

ЛОНДОН, июлӗн 22-мӗш. (ТАСС). «Таймс» хаҫатӑн Стамбулри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Турцине пырса ҫитнӗ ҫынсем Грецире пурнӑҫ мӗнле юхӑнса ҫитни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Греция официально итальянецсем оккупациленӗ ҫӗршыв шутланать, анчах унта нимӗҫсем питӗ нумай. Аэродромсем тата чугунҫул таврашӗсене Германия контроллесе тӑрать, тӗп вырӑнсене нимӗҫ офицерӗсем йышӑннӑ. Нимӗҫсемпе итальянецсем хушшинчи отношенисем ҫивӗчленсе кайнӑ ҫеҫ мар, тата вӗсем пӗр-пӗрин ҫине тӑшманла пӑхаҫҫӗ. Нимӗҫсем итальянецсене кураймаҫҫӗ, вӗсем Итали офицерӗсенчен уҫҫӑнах мӑшкӑлаҫҫӗ. Нимӗҫсемпе итальянецсем хушшинче час-часах тытӑҫусем те пулса иртеҫҫӗ. Пӗррехинче вӗсем пӗр-пӗрне хирӗҫ хӗҫпӑшалсемпех тӑнӑ, ҫавна пула икӗ енчен те вилнисемпе аманнисем пулнӑ. Ҫавӑн пек тытӑҫусем ан пулччӑр тесе, нимӗҫсемпе итальянецсен офицерӗсем уйрӑм ресторансенче апатланаҫҫӗ. Германипе Итали суд влаҫӗсен представителӗсем хушшинче те час-часах тавлашусем пулса иртеҫҫӗ. Кашниех пӗр-пӗрин распоряженине хакламасӑр тӑма хӑтланать.

Грецире пӗтӗм ҫӗршывӗпех йӗркесӗрлӗх тата взятка илесси сарӑлнӑ. Германипе Италин продовольстви енӗпе ҫӳрекен контролерӗсем продовольствие оккупациллӗ ҫара тытса тӑма кирлинчен нумайрах пухаҫҫӗ. Хӑйсен тарҫисем пулӑшнипе ҫав фашистла вӑрӑ-хурахсем ытлашши продовольствие халӑха калама ҫук хаклӑ сутаҫҫӗ. Грецире ҫӗркӑмрӑк запасӗсем чӑннипе йӑлтах пӗтсе ҫитнӗ. Чугунҫулсем ҫинче нимӗн йӗрки те ҫук. Афины хулине часах акӑ электроэнергипе газ пама пӑрахӗҫ, тесе шикленеҫҫӗ. Афины хулинче тата Грецин хӑшпӗр утравӗсем ҫинче продовольстви тӗлӗшпе пурнӑҫ ҫавтери начарланса ҫитнӗ. Магазинсенче пӗр уйӑх хушши ҫӑкӑрпа какай пачах пулман. Грецири хӑшпӗр пунктсенче ҫынсем йытӑсемпе кушаксене ҫисе пурӑнаҫҫӗ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 22-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑн Грецирен пырса ҫитнӗ посланникӗ Макви ҫапла каласа панӑ: Грецире нимӗҫсем продовольствие йӑлтах туртса илнӗ. Ҫыхӑну тата транспорт средствисене йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, Пирей портне пӗтерсе хунӑ. Грецин нумай салтакӗсем Афины хулинчи урамсенче ыйткаласа ҫӳреҫҫӗ. Грецин пулӑ тытас тӗлӗшпе ӗҫлекен флотне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫӗршыв продовольстви таврашӗсене ниҫтан та илеймест.

Макви США-на Берлинпа Лиссабон урлӑ пынӑ. Вӑл ҫапла пӗлтернӗ: Берлинри халӑх вӑрҫӑ ҫине тарӑхса пӑхать тата Англи самолечӗсем пырса бомбӑсем пӑрахасси вӑйланнӑҫемӗн вӑйлансах пынӑ пирки хыттӑн шикленеҫҫӗ.

Англи ҫар обозревателӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйӗпе хӑвачӗ ҫинчен

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. Рейтер агентствин ҫарӗҫ обозревателӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, генерал Губерт Гоф вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн ҫакна кӑтартса парать: халӗ вӑйлӑ пыракан операцисен кашни кунӗ вӑрҫӑ ӗҫне вӗҫленессинче пысӑк вырӑнта тӑрать, вырӑссемшӗн пит те усӑллӑ. Нимӗҫсем вӑйхал тата мораль тӗлӗшӗнчен хӑвӑрт ывӑнса пыраҫҫӗ пулмалла, мӗншӗн тесен ҫӑмӑллӑн ҫӗнтерессе тата вӑрҫӑна хӑвӑрт пӗтерессе шаннӑ хыҫҫӑн ӗҫ тухман пирки тарӑхни салтаксен шухӑш-кӑмӑлне хытӑ хавшатать. Кунсӑр пуҫне, нимӗҫсен танксем, механизациленӗ средствӑсем, снабжени запасӗсем, ремонт тумалли материалсем пӗтсе пымалла, бронетанковӑй чаҫсем хӑйсен базисенчен мӗн чухлӗ инҫете куҫаҫҫӗ, вӗсен ҫухатӑвӗсем ҫавӑн чухлӗ пысӑкрах пулаҫҫӗ. Германи ҫарӗ хӑй темӗн чухлӗ тӑрӑшнӑ хыҫҫӑн та, хӑйне хирӗҫ никам ҫӗнтерейми ҫынсен тата тупӑсен стени тӑнине тӗл пулни, нимӗҫсен ҫарӗн пултарулӑхне пӗтерет. Вырӑссен ҫын ҫитмест е тата вырӑс салтакӗсен, вырӑс халӑхӗн мораллӗ шухӑш-кӑмӑлӗ кӑшт та пулин чакнӑ тесе кӑтартма нимӗнле сӑлтав та ҫук. Вӑрҫӑ вӗҫленессине, уйрӑмӑнах вӑйсӑрланса ҫитнӗ войскӑна хирӗҫле вӑрҫӑ вӗҫленессине лайӑх хӗҫпӑшалланнӑ ҫынсен масси татса парать, вырӑссем хӗҫпӑшал ҫитменнине туймаҫҫӗ. (ТАСС).

Германи авиацийӗ Мускав ҫине тапӑнма хӑтланни ӑнӑҫсӑр пулни ҫинчен Англири пичет мӗн ҫырать

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. Нимӗҫсем Мускав ҫине тапӑнма хӑтланни ӑнӑҫсӑр пулни ҫинчен калакан хыпарсене Англири хаҫатсем палӑрмалла вырӑнта пичетлесе кӑлараҫҫӗ.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаҫат ҫапла ҫырать: Германи авиацине Мускав ҫине бомбӑсем пӑрахма приказ панӑ, паллах, ҫакна туса хӗвелтухӑҫӗнче тата хӗвеланӑҫӗнче пулакан пысӑк ҫухатусене май Германире пулса тӑнӑ йывӑр атмосферӑна сирсе яма шутланӑ.

Ыран июлӗн 24-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Германин Мускава ҫитме хӑтланса пӑхнӑ бомбардировщикӗсене зенитнӑй артиллерирен питех те вӑйлӑн персе кӗтсе илнӗ, тесе пӗлтерет Рейтер агентстви. Ҫакна палӑртмалла, — тесе ҫырать агентство, — зенитнӑй артиллерипе прожекторсем пӗр-пӗрне питех те ӑнӑҫлӑн пулӑшса пыраҫҫӗ, ҫавна пула уйрӑм самолетсем кӑна хула тулашӗнчи оборона витӗр тухса бомбӑсем пӑрахма пултарнӑ. Пушара хирӗҫ кӗрешекен командӑсем тата профессионаллӑ пожарниксем хӑйсен ӗҫне лайӑх туса пынӑ, тул ҫутӑлнӑ тӗле пушарсене пурне те сӳнтернӗ. (ТАСС).

Турцире Германипе Итали самолечӗсене персе антарнӑ

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Анкарари ҫар авиацийӗн ҫыннисем хушшинче ҫапла калаҫҫӗ: виҫӗ кун каялла Турцин зенитнӑй артиллерийӗ Энос (Турци Фракийӗ) районӗнче Италин разведка тӑвакан самолетне персе антарнӑ. Чикӗ урлӑ вӗҫсе каҫнӑ чухне самолета асӑрхаттарнӑ пулнӑ, анчах вӑл ҫапах та каялла ҫаврӑнса кайман. Самолет экипажӗ пӗтнӗ.

Ҫавӑн пекех тата хаҫат Турци зенитчикӗсем Хура тинӗс ҫинче Караджадаг патӗнче Германин разведка тӑвакан самолетне персе антарни ҫинчен пӗлтерет.

Югославири пысӑк пӑлханусем

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. (ТАСС). Югославири районсенчен пӗринче восстани пыни ҫинчен малтанах пӗлтернӗччӗ, ҫав восстание Сербипе Черногори партизанӗсен групппи организациленӗ. Партизанла движение пӗтӗм ҫӗршывра вӑйлатса яма пулӑшнӑ ҫак восстание оккупантсен войскисем ку тарана ҫитсе те пусарайман. Германири Информаци бюровӗ, Югославири событисем ҫинчен ку таранччен нимӗн шарламасӑр тӑнӑскер, паян ирӗксӗрех ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ: Нови-Пасар районӗнче сербсен четникӗсем (партизанӗсем) оккупантсен войскисем ҫине тапӑнса, вӗсене пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Восстание пусарма ҫав района ҫӗнӗ подкрепленисем янӑ.

Югославире пӑлханусем чарӑнман

ЛОНДОН, июлӗн 25-мӗш. Югославин Лондонра ӗҫлекен пичет бюровӗ Югославире восстани халӗ те пырать, тесе пӗлтерет. Ҫак восстание Герцеговинӑри тата Черногорири сербсем 5 пин ҫын хутшӑннӑ. Восстание пусарма хорват салтакӗсене тата Итали гарнизонне янӑ пулнӑ. Серби партизанӗсемпе вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, Итали салтакӗсем каялла чакма тытӑнсан, Германи офицерӗсем Хорват войскисене каялла чакакан итальянецсем ҫине пеме приказ панӑ. (ТАСС).

Англи войскисене Абиссинирен куҫараҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 24-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Сметс генерал пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин Кӑнтӑр Африкӑри мӗнпур войскисене Абиссинирен Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫне куҫараҫҫӗ. Полицейскисен обязанноҫӗсене абиссинецсем туса пыраҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

К СВЕДЕНИЮ
студентов Чувашского Государственного Педагогического Института.

Дирекция Чувашского Пединститута сообщает, что учебные занятия на IV курсах начинаются 1 августа, а на всех остальных курсах Педагогического и Учительского Института—с 1 сентября.

2—1 Дирекция.

ЧУВАШПОТРЕБСОЮЗОМ ПРОИЗВОДИТСЯ НАБОР НА
МЕСЯЧНЫЕ КУРСЫ
продавцов и завмагами сельпо

Принятые обеспечиваются общежитием и стипендией в размере 150 рублей.

Принимаются исключительно по командировкам райпотребсоюзов.

Начало занятий с 1 августа с/г.

Отдел кадров Чувашпотребсоюза.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, ялхуҫалӑхӗпе промышленность пайӗсен — 0—83, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, дежурнӑйӑн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5073

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ 345. ф. 6 ₅8 84 п. л.